Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АВГУСТ 28 ВЫРСАРНИКУН 198 (5011) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухат. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 6. Дом Печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторĕн — 5—87, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—88, ялхуçалăх пайĕн—4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—87, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн—6—23.

Йалсенчи парторганизацисен ÿсĕмне вăйлатасси

ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ „Парти ретне çĕнĕрен членсем илме пуçласси çинчен" решенине йышăнни кăçал çентаберĕн 29-мĕшĕнче икĕ çул тулат. Çак вăхăтра рабочи класпа колхоз хресченĕсен тата интеллигенцин малта пыракан, пур йенчен те шанчăклă та примерлă çыннисем болшевикла парти ретне вуншар пинĕн кĕчĕç.

ПСК(б) Парти Тĕпкомĕн 1937 çулхи феврал-март уйăхĕсенче пулса иртнĕ Пленумĕн решенийĕсене сÿтсе-йавнă май, вырăнти парторганизацисем хăйсен ĕçĕсене нумай лайăхлатрĕç. Кашни коммунисăн, активлăхĕ, ĕçри пултарулăхĕ ÿссе çитĕнчĕ. Партире тăман активиссем хушшинче ĕçлесси темиçе хут вăйланчĕ. Активиссем парти ретне кĕрсе татах та хастарлăн ĕçлеме тытăнчĕç.

Пирĕн Чăваш АСС Республикĕнче, 1936 çулти нойабĕр уйăхĕнчен пуçласа кăçалхи ийул уйăхне çитиччен, парти кандидатне 852 çынна илнĕ, 541 çынна кандидатран парти членне куçарнă. Парти ÿсĕмĕ, уйрăмăнах, 1938 çулти йанвартен пуçласа вăйлăрах пыма пуçларĕ. Кăçалхи йанвартен ийул уйăхне çитиччен, çур çул хушшинче, парти кандидатне 383 çынна илнĕ; кандидатран парти членне 215 çынна куçарнă.

Парти ретне илнĕ йулташсем нумайĕшĕ колхоз строительствинче активлăн ĕçлесе пырса, питĕ пысăк опытсем пухнă. Акă, тĕслĕхрен, Тутаркас районĕнчи Федăр Иванăвич Веçелов йулташ. Вăл М. Горький йачĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса ĕçленĕ. Веçелов йулташ председател пулса ĕçлекен колхоз районра малта пыракан колхозсенчен пĕри пулнă. Çапла лайăх ĕçленине кура, ăна районри ĕçе илнĕ.

Колцов йулташ—ПССЛКС членĕ, Буденнăй йачĕпе тăракан колхозăн бригадирĕ тата комсорг пулса ĕçленĕ. Колцов йулташ тăлăхăн ÿснĕ. Колхоза кĕриччен йалти кулаксем патĕнче тарçăра пурăннă, унăн хăйĕн çурт-йĕрĕ те пулман.

— Мана совет влаçĕ çын турĕ, совет влаçĕ пулман пулсан, епĕ пайан кун та пулин кулаксем патĕнче тарçăра асапланса çÿренĕ пулăттăм, хам ĕмĕре пĕр хисепсĕр иртернĕ пулăттăм,—тет Колцов йулташ. Халĕ вăл колхозра ударник, примерлă ĕçлесе пырат. Тырпул унăн нумай, хăйĕн çурчĕ те выльăх-чĕрлĕхĕ те пур.

Колцов йулташăн кăтартулă, усăллă ĕçне шута илсе—ПСК(б) Парти Тутаркас райкомĕ ăна парти кандидатне илнĕ, коммунисла аслă шкула вĕренме йанă. Çавăн пек тĕслĕхсем вуншарăн, çĕршерĕн илсе кăтартма пулат.

Анчах чылай районсенчи парторганизацисем парти ретне çĕнĕ членсем илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Тĕп çитменлĕхсенчен пĕри вăл—колхозри парторганизацисем начар ÿссе пыни. Кăçалхи йанвартен пуçласа пайанхи куна çитиччен чăваш парторганизацинче колхозниксене мĕн пурĕ те парти ретне 100 çын ытларах кăна илнĕ.

Нумай райкомсем колхозсенчи парторганизацисен йышне ÿстерес тĕлĕшпе активлă ĕçлемеççĕ. Çавăнпах ĕнтĕ Çĕмĕрле районĕнчи колхозсенче пĕр организаци çеç шутланат. Районри парторганизаци район центрĕнче ĕçлекенсем шучĕпе кăна тăрат. Турхан районĕнче колхозсем 43. Çаксенчен пĕринче—Липăвкă колхозĕнче кăна парторганизаци пур. Шупашкар районĕнче те колхозри парторганизацисем 2 анчах. Чăваш республикинчи тата ытти районсенче те ĕçсем çакăн майлах начар тăраççĕ.

ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ „Парти ретне çĕнĕ членсем илес ĕç мĕнле пыни çинчен" 1938 çулти ийулĕн 14-мĕшĕнче кăларнă постановленийĕнче йалти парторганизацисен ÿсĕмĕ çителĕксĕрри çинчен уççăн кăтартса панă.

Йалсенче парти ÿсĕмĕ начар пыни, паллах ĕнтĕ, парти райкомĕсем ку ĕç çине сÿрĕккĕн пăхнинчен, йалти, колхозри активиссемпе çителĕклĕ таран ĕçлеменнинчен тухса тăрат.

Уйрăмăнах кунта комсомолăн йалти пуçламĕш организацисене парти райкомĕнче ĕçлекенсем начар пулăшнине палăртмала. Кулленхи ĕçре пулăшса пыни çителĕксĕр пиркийех ĕнтĕ комсомолецсем, колхозри активиссем парти ретне кĕресси начар пырат.

Парти ретне кĕрес текен йулташсем рекомендаци тупаймасăр тăнисем пур. Парти ретне çĕнĕрен кĕрекен йулташсене рекомендаци парса, хăйсем çине ответлăх илес синчен хăшпĕр комунисcем хăраççĕ.

Йалти парторганизацине ÿстерес тĕлĕшре райкомсем ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ тахçанах сивленĕ метăдпа—йалсене районран „уполномоченнăйсем" йарса ĕçлеççĕ. Парти ретне ÿстерме тăрăшман коммунисcем çинчен Сталин йулташ колхозник ударниксен пĕрремĕш съесĕнче калавине аса илтерсен питех те усăллă пулмала. Сталин йулташ ун чухне çапла каларĕ:

„Партире тăракансем пĕлĕт çинчен ÿкменнине манма йурамаст. Партире тăракансен хăйсем хăçан та пулин пурте партире тăман çынсем пулнине астăвас пулат. Пайан вăл—партире тăман çын, ыран—партире тăракан çын пулат. Мĕн пур-ха вара кунта мăнкăмăлланса пуçа ывăтмали? Пирĕн хушăра, ватă болшевиксем хушшинче, партире 20—30 çул ĕçлекен çынсем те сахал мар тĕл пулаççĕ. Анчах епĕр хамăр та вĕт ĕлĕкрех партире тăман çынсем пулнă. Çирĕм-вăтăр çул ĕлĕкрех ун чухнехи партийецсем пире нимĕн вырăнне те хумасăр, парти çывăхне те йаман пулсан, мĕн пулнă пулĕччĕ-ха вара пирĕнтен? Çак пире, тен, темиçе çуллăхах партирен уйăрса тăнă пулĕччĕ".

Верховнăй Советсен суйлавĕсене иртернĕ чухне пирĕн Чăваш республикĕнчи колхозсемпе йалсенчи халăх хушшинче агитаторсем, доверенăйсем, суйлав комиççин членĕсем пулса ĕçлесе çитĕннĕ активиссене—Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм чĕререн тăрăшакан çынсене—колхозри стахановецсемпе ударниксене, агрономсене, учителсене тата йалти ытти активиссене парти ретне илмеле.

Халăх тăшманĕсем парти ретне кĕрсе кайма тăрăшаççĕ. Кашни парторганизаци, кашни коммунис çавна асра тытса, парти ретне халăх тăшманĕсем кĕрсе кайасран сыхланмала. Болшевикла сисĕмлĕхе татах та темиçе хут ÿстерни, вăйлатни, Ленин—Сталин партийĕн йалавне çÿлте тытса пыни кирлĕ.

Кашни парторганизацин тасаран та таса тата пысăк обйазанăçĕ вăл—ПСК(б) Парти ретне коммунисăмшăн паттăрăн, пĕр пăркаланмасăр кĕрешекенсене илесси, парти ретне çĕнĕрен илнĕ йулташсене болшевикла воспитани парасси, парти речĕн тасалăхне куç шăрçине сыхланă пек сыхласси, Ленин—Сталин парти членĕн йатне çÿлтен çÿле хăпартса пырасси пулса тăрат.

Телеграммă

ПСК(б)П райком çекретарĕсене, райĕçтăвком председателĕсене

Обком тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ кĕраки тăвас, авăн çапас ĕç çителĕксĕр пулса пырат, тесе шутлаççĕ, августăн 20-мĕш тĕлне Канаш районĕ 0,4 процент акнă, 23 процент çапнă. Трак районĕ пĕрре те акман, 20 процент çеç çапнă, Елĕк районĕ 2,7 процент акнă, 35 процент авăн çапнă. Ишлей, Трак, Шупашкар районĕсем чылай колхозĕсенче агротехникăна пысăккăн пăсаççĕ: вăрлăха суртламасăр, чÿхемесĕр акаççĕ, çейалкăсемпе усă курмаççĕ, алăпа акаççĕ, суртлă вăрлăх улăштарса илмеççĕ, çавăн пекех акас умĕн çĕре сухаласа çемçетес ĕçре те агротехникăна пăсаççĕ, таса та çемçе çĕртме анисене култиваци тăвас вырăнне, тепĕр хут сухаласа тăпрана типĕтсе йараççĕ.

Ишлей, Трак, Канаш, Шупашкар МТС-сен директăрĕсем молотилкăсене кирлĕ пек йусассине пурнăça кĕртмен, авăн çапма пит кайа йулса тытăннă, молотилкăсемпе пĕрер çменă çеç ĕçлеççĕ. Обком тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çапла шутлаççĕ: райкомсемпе райĕçтăвкомсем, МТС-сем уй-хир ĕçĕсене черетпе тăвас текен сийенлĕ шухăш-кăмăлсене çĕмĕрсе тăкман, агротехникăна пурнăça кĕртес ĕçре вăйсене тĕрĕс тăратса тухас ĕçре акара тата авăн çапнă çĕрте тракторпа паркĕн ĕçĕсене организацилес ĕçре колхозсене пулăшу паман.

Акас ĕçри, авăн çапас ĕçри çакăнта кăтартнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме, суртлă вăрлăхсем улăштарса илессине пурнăça кĕртме, лашапа тата тракторпа ĕçлемелли çейалкăсемпе пĕтĕмĕшпех те туллин усă курма, икшер сменăпа ĕçлессине организацилеме хушатпăр. Ĕçсене лайăх организацилесе çывăх 2-3 кун хушшинче акса пĕтерме, авăн çапас ĕçе оперативлă йертсе пырассине, кашни молотилкă ĕçне контролĕсе тăрассине пурнăçа кĕртме хушатпăр. Машиниссемпе механиксене кирлĕ пек техникăлă пулăшу парассине организацилĕр.

Молотилкăсене пĕчĕк ремонт тăвас ĕçе предприйатисенчи ремонт маçтĕрĕсене йавăçтарăр. Обком августăн 15 мĕшĕнче авăн çапас ыйтупа панă телеграммăна пĕтĕмĕшпех пурнăça кĕртме хушатпăр.

ПСК(б)П Обком çекретарĕ ДУБАВ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председател замеçтителĕ СОМĂВ.

Хĕрлĕ Çар ретне тăма хатĕр

ССРС Оборонă Халăх Комиссарĕ Совет Сойузĕн Маршалĕ Ворошилăв йулташ Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн черетлĕ призывĕ çинчен кăларнă приказа Советсен çĕршывĕнчи призывниксем калама çук пысăк хастарлăхпа кĕтсе илчĕç.

Пĕтĕм Сойуз тăрăх призыв йачĕпе нумай çынлă митингсем пулса иртнĕ.

Августăн 26-мĕшĕнче Мускаври Бауман районĕнчи районри призывниксен слотне Октябер тантăшĕсем, тата тепĕр темиçе кунтан Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн хисеплĕ воинĕ йатне илекен çамрăксем пин çынна йахăн пухăннă. Вĕсен хушшинче çар ĕçне, политикăна отличнă вĕренсе хатĕрленнисем, производствăри стахановецсем нумай.

Слота пынисен пурин шухăшне те палăртса, призывник Белов йулташ çапла каланă:

— Пирĕн аттесемпе аннесем телейлĕ те мăнаçлă: вĕсен ывăлĕсене хисеплĕ те чаплă права—хамăрăн социалисăмлă государствăна сыхлас права панă. Епĕр хĕçпăшал таврашне тĕплĕн вĕренме тата, кирлĕ пулсан, тăван çĕршыва сыхлама тăрса тăшмана, хамăрăн Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи мухтавлă бойецсем çĕмĕрнĕ пекех çĕмĕрепĕр.

Слотра 4 красноармейец-ывăлсен ашшĕ Нефедăв йулташ тухса калаçнă.

Слота пухăннисем, тăвăллăн алă çупса халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ патне салам йама йышăннă.

Сталинградра Дзержинский площечĕнче пулнă митинга темиçе пин çын пухăннă.

— Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи Хĕрлĕ йалавлă фронт чаçĕсенче,—тенĕ СТЗ-ра ĕçлекен призывник Николай Волкăв,—манăн икĕ тăванăм службăра тăраççĕ. Епĕ хама Инçет-Хĕвелтухăçне, хам тăвансем службăра тăракан чаççенчен пĕрне йама ыйтатăп. Вĕсемпе пĕрле епĕ Йапони самурайĕсене, вĕсем пирĕн таса чикĕсем çине тепĕр хут тапăнма хăтлансан, çĕмĕрĕп.

(ТАСС).

Тăван çĕршывăн патриочĕсем Хĕрлĕ Çара кайаççĕ

Мускав облаçĕнчи Кашир районĕнчи Бузаков йалĕнчи Михаил Денисăв колхозник çемйинчи 5 пĕртăван Хĕрлĕ Çар службинче тăраççĕ. Иккĕшĕ—пограничниксем, пĕри — краснофлотец, иккĕшĕ—артиллериссем. Михаил—тăвансем хушшинче чи çамрăкки. Вăл хăйне сывлăш флотне илме хĕрÿлĕн ыйтат.

— Пĕр тăшман та,—тенĕ Михаил Денисăв,—пирĕн вичкĕн куçсенчен, пирĕн тĕл тивекен пулясенчен хăтăлас çук. Вăл нимĕнле маскăпа витĕнсен те пиртен пытанса йулас çук.

Мускав облаçĕнчи çамрăксем хăйсен тăван Хĕрлĕ Çарне призыва кĕме пысăк праçнике хатĕрленнĕ пек хатĕрленеççĕ. Кашир районĕнче районри çар комиссариатне çамрăк патриотсенчен кунсеренех нумай çырусем—Хĕрлĕ Çар службине йышăнма хĕрÿлĕн ыйтса çырнă зайавленисем пыраççĕ.

Кунцĕвă тата Красногорск районĕсенчи хапрăксем, совхозсем тата колхозсем Хĕрлĕ Çар речĕсене лайăх çамрăксем йараççĕ. Призывниксенчен 40 проценчĕ—ворошиловла тĕл перекенсен пĕрремĕш сыпăк значокне илнĕ, 10 проценчĕ—иккĕмĕш сыпăк значокне илнĕ, 18 çын Хĕрлĕ Флот службине тăма йатарласах вĕренсе хатĕрленнĕ. Производствăран татăлмасăр 61 лотчик, 14 моторис тата 8 парашютиспа планерис хатĕрленĕ. Призывниксем хушшинче çырăва пĕлменни йе сахал пĕлекенни пĕр çын та çук.

(ТАСС).

Хутпĕлменлĕхе йалтах пĕтерсе çитерер

Йулашки вăхăтра халăха çутта кăларас ĕçĕн вырăнсенчи органĕсенчен нумайĕшĕ хут пĕлменнисене тата сахал пĕлекеннисене вĕрентес ĕçе йалтах пăрахнă. РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕн çитеннисене вĕрентес тĕлĕшпе ĕçлекен Управлени айăпĕпе тата халăха çутта кăларас ĕçĕн вырăнсенчи органĕсен айăпĕпе ССРС Халăх Комиссариачĕн Совечĕпе ПСК(б) Парти Тĕпкомĕ хутпĕлменлĕхе 1937 çулта йалтах пĕтерсе çитерме ыйтнине пурнăça кĕртмен.

Халхи вăхăтра РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ 1938/39 вĕренÿ çулĕнче республикăра хутпĕлменлĕхе йалтах пĕтерес тĕлĕшпе тумали ĕçсем палăртса хунă. Кăçалхи октаберĕн 1-мĕш тĕлне 14 çула çитнисенчен пуçласа 50 çула çитиччен хутпĕлмен çынсене пурне те вĕрентме тытăнмала. 1939 çулхи майăн 1 мĕш тĕлне вĕсенчен кашнийех хут пĕлменнисен шкулĕн программинче кăтартнă чухлĕ пĕлÿ илме пултараççĕ. Çентаберĕн 15-мĕш тĕлне кашни колхозра, йалсоветра тата предприйатире хутпĕлменлĕхе пĕтермелли ĕçсен планĕсем тумала. Вăл плансене рабочисемпе колхозниксен пухăвĕсенче сÿтсе-йаваççĕ, колхоз правленийĕсем тата йалсоветĕсемпе посолкă совечĕсен пленумĕсенче çирĕплетеççĕ.

Вĕренÿ-педагогикă издательстви хут пĕлменнисен шкулĕсем валли букварсем тата арифметика задачникĕсем пĕр мĕлйун екземплар кăларат. Хут сахал пелекенсен шкулĕсем валли мĕлйун екземплар тиражпа грамматика тата географине вĕренмели кĕнекесем, 800 пин екземплар тиражпа—арифметикă задачисен сборникĕ тата вуламали кĕнеке кăлараççĕ. Кунсăр пуçне, учителсене пулăшма методикăлă материалсем кăлараççĕ, вĕсен тиражĕ пысăк пулат.

(ТАСС).

Т. Г. Шевченко çуралнăранпа 125 çул тултарнине уйавлама хатĕрленни

Украинăра украинсен аслă поечĕ Т. Г. Шевченко çурални 1939 çулхи март уйăхĕнче 125 çул тултаракан уйава иртерес тĕлĕшпе правительствă комитечĕ тунă.

Поетăн произведенисене вилăн пичетлесе кăларма палăртаççĕ. Шевченкон „Кобзарь" йатлă паллă произведенине мĕлйун тиражпа кăларма йышăннă.

Гослитиздатра (Мускав) халĕ Шевченкон суйласа илнĕ произведенисене вырăсла куçарас ĕç пырат.

Белоруççире „Кобзарь" произведенине поетсен бригади куçарма тытăннă. Азербайджан поечĕсен ушкăнĕ çитес кунсенчех Шевченко çинчен материалсем пухма Кийĕва тухса кайат.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Августăн 25-мĕшĕнче Хĕвелтухăç фронтĕнче пăлхавçăсемпе интервентсен çарĕсем, темĕн чухлĕ танксемпе тата вăйлă артиллерипе усă курса, Ебро йуханшывĕ тăрăхĕнче темиçе высотăна йышăннă. Вилйалбаран Корбера кайакан çул çине, çавăн пекех тата Каналет йуханшыв районĕнче фашиссем тунă хайар атакăсене республикă çарĕсем сирсе йанă. Çакăн чухне пăлхавçăсен нумай çухатусем пулнă.

Гандеса районĕнче йулашки икĕ кун хушшинче республиканецсем фашиссен 33 самолотне персе антарнă.

Центрти фронтăн Естремадурă участкинче, Сухар йуханшыв районĕнче, республикă çарĕсем пăлхавçăсенчен стратегилĕ пысăк вырăн йышăнакан хăшпĕр пунктсене туртса илсе йуханшывăн сулахай çыранĕ тăрăх малалла йнăçлăн куçса пыраççĕ. Пăлхавçăсем, çапăçусем пулнă вырăнта нумай вăрçă хатĕрĕсемпе тыткăна лекнĕ салтаксем нумай хăварса, йĕркерен тухсах кайала чакнă. Республиканецсен командованийĕ тыткăна илнĕ 200 çынна тыла йанă. Республикă çарĕсем фашиссенчен 4 тупă, 2 танк, нумай пулеметсем, танксем çине перекен 4 тупă, 5 грузовик, 2 автомобил тата ытти вăрçă хатĕрĕсене нумай туртса илнĕ.

Ытти фронтсенче лăпкă тăру улшăнман.

Августăн 25-мĕшĕнче фашиссен ивлĕк самолочĕ Торревиеха йалĕнчи (Аликанте çывăхĕнче) мирлĕ халăхсем çине бомбăсем пăрахнă. 18 çурта ишĕлтернĕ, 25 çын вилнĕ тата 70 çын аманнă.

(ТАСС).

Республикăлла Испанире. ЎКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Долорес Ибаррури (Пассионарийă) республикă çарĕн бойецĕсен митингĕнче тухса калат.

(Союзфото).

Сун Цзин-лин Англине тата Америкăри Перлешÿлĕ Штатсене чĕнсе калани

Сун Цзин-лин (Сун Йат-сен арăмĕ) Кантона пынă. Хулари общественнăй организацисем ăна чаплăн кĕтсе илсе йышăннă. Тухса каланă сăмахĕсенче, вăл тĕнчери державăсене тата уйрăмах Англипе Америкăри Перлешÿлĕ Штатсене Йапони валли чĕрт-тавар тата вăрçă материалĕсем тăратассине пăрахăçлама чĕннĕ. Сун Цзин-лин калана тăрăх, Йапони Англирен вăрçă хатĕрĕсем тумалли чĕртавар 30 процент, Америкăри Перлешÿлĕ Штатсенчен 32 процент илет.

(ТАСС).

Берлинра рабочисен арăмĕсем полицине хирĕç тăнă

Августăн 23-мĕшĕнче Берлинри Потсдамск вокзалĕнче рабочисене Сăар облаçне çар укрепленийĕсем сооруженийĕсене тунă çĕрте ĕçлеме йанă чухне хăркăшулă сцена пулса иртнĕ. Фашисла влаçсем мобилизацилене рабочисен арăмĕсем хăйсен упăшкисене йарасшăн пулман. Ăсатма пынă хĕрарăмсене полицейскисем вакунсем çинчен вăйпах тĕксе кăларнă та, пуйăса тапратса йама сигнал панă, çакăн хыççăн хĕрарăмсен ушкăнĕ пăрава умне релсăсем çине выртнă. Полици вăйлă отрйачĕпе хĕрарăмсем тата ачасем хушшинче кĕрешÿ сехет çурă хушши пынă. Вуниккĕ рабочин арăмне арестленĕ.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центрти Китайра йулашки икĕ кун хушшинче Жуйчан районĕнче (Цзюцзйанран хĕвеланăç йеннелле) çĕнĕрен хайар çапăçусем пуçланса кайнă. Йапони çарĕсем, типĕ çĕр çинчен тата сывлăшран персе хÿтленсе, Жуйчан çинелле наступлени туса пыраççĕ, вĕлерекен газсемпе анлăн усă кураççĕ. Августăн 22-мĕшĕнче Жуйчан районĕнче Чучуан йалĕ патĕнчи çапăçура Китай çарĕн батальонĕнчен 4 бойец кăна хăтăлса йулнă. Ыттисене пурне те газсем тивнĕ.

Йанцзы йуханшывĕн кăнтăр йенчи çыранĕ çинче Наньканн (Синцзы) хули патĕнче, хĕвеланăçнелле пыракан йапонецсен наступленине чарса лартнă. Ку районра Йапони авиацийĕ Китай позицийĕсем çине химилĕ бомбăсем пăрахат.

Августăн 23-мĕшĕнче Йанцзы фронтĕнчен Шанхайа Йапонин аманнă салтаксем 4 пин çын пырса çитнĕ.

Йанцзы йуханшывĕн сурçĕр йенчи çыранĕ çинче йулашки ĕрне хушшинче йапонецсем Китай çарĕсен линине (Цзаньшань—Тайху—Сусун—Хуанмей хушшинчи шоссе çулĕ тăрăх) татса каçма темиçе хутчен те хăтланса пăхнă, анчах тăрăшни ахалех пулнă.

Çурçĕр Китайра Шаньси провинцин кăнтăр пайĕнче Йапони çарĕсем Пучжоуна туртса илнĕ хыççăн Хуанхе йуханшывĕ хĕрринелле пырасшăн кăлăхах тăрăшаççĕ. Китай çарĕсем вĕсене хирĕç вăйлăн тăраççĕ.

Хенань провинцин çурçĕр пайĕнче те йапонецсем çавăн пекех Хуанхе йуханшывĕ патне çывхарма тăрăшаççĕ, анчах кунта та вĕсем ĕçĕ ăнмаст.

(ТАСС).

Йĕтĕн пуçтармали çĕнĕ машинăсем

Колхоз уйăхрĕсенче йĕтĕне пуçтармали çĕнĕ машинăсене сăнаса пăхнă. Йĕтĕн комбайнĕсене сăнани хуçалăх йенчен пысăк вырăн йышăнат. Çав машинăсем пĕр вăхăтрах йĕтĕне татаççĕ, тăррине тÿрĕсе илеççĕ тата йĕтĕне кĕлте туса çыхаççĕ. Сăнав кăтартнă тăрăх, йĕтĕн комбайнĕсем йĕтĕне татса пуçтарас ĕçĕн процесне кĕскетеççĕ, ĕç вăйне нумай перекĕтлеме майсем параççĕ тата улăмпа йĕтĕн пуçĕсен тăкакне йалтах пĕтереççĕ. Татса пуçтарас ĕçĕн процесне кĕскетни сÿсĕн хаклă пахалăхне нумай ÿстерет.

Кирйанăв колхозник тунă йĕтĕн пуçне татмали машинăна сăнани ăнăçлă пулнă. Лаша вăйĕпе ĕçлекен çак машинă пĕр сехет хушшинче 1.200—1.500 кĕлте пуçне татма пултарат. Кирйанăв машинипе, йĕтĕн татмали машинă çумне хушса, мĕн пур районсенче усă курма пулат.

(ТАСС).

А. И. Куприн писател вилнĕ

Августăн 24-мĕшĕнче çĕрле Ленинградра Ерисман йачĕпе тăракан пулницăра вырăссен паллă писателĕ — 69 çулхи Александр Иванăвич Куприн рак чирĕпе чирлесе вилнĕ.

(ТАСС).

Кӗрхи тырӑсене акас тата авӑн ҫапас ӗҫри хӑвӑртлӑхсене ӳстермеле

Парти Чӑваш Обкомӗ „Кӗрхи тырӑсене акас тата авӑн ҫапас ӗҫсем мӗнле пыни ҫинчен" постановлени йышӑннӑ. Обком хӑйӗн постановленийӗнче республикӑра кӗрхи тырӑсене акса хӑварас, авӑн ҫапас ӗҫсем ҫителӗксӗр пулса пынине палӑртать. Уйрӑмах, кӗрхи тырӑсене акас тӗлӗшпе Ишлей, Канаш, Шупашкар, Куславкка, Трак, Йелчӗк, Йетӗрне районӗсем йулса пыраҫҫӗ. Августӑн 20-мӗшне Ишлей районӗнче кӗрхи тырӑсене акмали плана 1,3 процент кӑна тултарнӑ, 38 процент авӑн ҫапнӑ. Елӗк районӗ кӗрхи тырӑсене акмали плана—2,7 процент, авӑн ҫапас плана—35 процент, Шупашкар районӗ кӗрхи тырӑсене акмали плана-3,7 процент, Канаш районӗ кӗрхи тырӑсене акассине 0,4 процент, авӑн ҫапассине 22 процент, Трак районӗ авӑн ҫапассине 22 процент, Йелчӗк районӗ авӑн ҫапассине 4 процент, Йетӗрне районӗ авӑн ҫапассине 28 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Кӗрхи тырӑсене акса хӑварасси пит вӑраххӑн пырать. Районсенче кӗрхи тырӑсене акса хӑвармали срӳксене пӑхӑнмаҫҫӗ. Ишлей, Шупашкар, Трак тата Тутаркас районӗсенче ҫейӑлкӑсемпе акас чухне 15—16 процент алӑпа акаҫҫӗ. Ҫейӑлкӑсемпе туллин усӑ курни ҫук. Ишлей, Патӑрйел, Куславкка машинӑ-тракторлӑ станцисенче ҫейӑлкӑсене малтан тӗплӗн йусаман пирки, халь уйра вӗсемпе кирлӗ пек ӗҫлеймеҫҫӗ.

Трак районӗнчи „Буксир" тата Ишлей районӗнчи „Алино" колхозсенче вутпуҫҫирен чӳхемен вӑрлӑхсемпе акаҫҫӗ. Ҫак колхозсенчех суртласа тасатман вӑрлӑхсемпе, ҫитменнине тата алӑпа акаҫҫӗ. Ҫавнашкалах ку колхозсенче агротехникӑна пӑсса ӗҫлеҫҫӗ.

Августӑн 20-мӗшне пурӗ 21 процент авӑн ҫапнӑ. Молотилкӑсемпе туллин усӑ курманни палӑрать. Трак районӗнче молотилкӑсемпе пӗр смена ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ.

Турхан районӗнче кӗрхи тырӑсене 50 процент ытларах алӑпа акнӑ. Ҫӗрпӳ, Шупашкар районӗсенчи колхозсенче те 16—21 процент таран алӑпа акаҫҫӗ.

Парти Чӑваш Обкомӗ кӗрхи тырӑсене акас, авӑн ҫапас ӗҫсемпе йулса пынине парти райкомӗсем, райҫӗрӗҫ пайӗсем, МТС-сем тата Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ уйхир ӗҫӗсене черетпе туса пырассине пӗтермен пирки пулнӑ тесе шутлать. Вӗсем колхозсене агротехникӑна тӗрӗс пурнӑҫа кертсе пырас, ӗҫ вӑйне тӗрӗс йӗркелес тӗлӗшпе татӑклӑн йертсе пулӑшса пыман. Ишлей, Канаш, Куславкка, Трак, Шупашкар МТС директӑрӗсем малтан молотилкӑсене пӗтӗмпех пахалӑхлӑн йусаттарса ҫитерме пултарайман. Чылай МТС-сем авӑн ҫапма кайа йулса тытӑнчӗҫ, молотилкӑсемпе туллин ӗҫлеймеҫҫӗ.

Парти Чӑваш Обкомӗ Ишлей, Трак, Елӗк, Шупашкар тата Канаш парти райкомӗсен ҫекретарӗсене, райҫӗрӗҫ пай пуҫлӑхӗсене тата МТС директӑрӗсене кӗрхи тырӑсене пысӑк пахалӑхпа акса хӑварма кирли ҫинчен ҫирӗппӗн асӑрхаттарса хӑварнӑ.

Районри организацисен кӗрекинчи, авӑн ҫапнӑ ҫӗрти ҫитменлӗхсене халех пӗтерессишӗн кӗрешмеле. Кӗракине кӗске срукра пысӑк пахалӑхпа акса хӑвармала. Ҫавӑн пекех авӑн ҫапассипе те ӑнӑҫлӑн ӗҫлемеле.

Ӑмӑртса ӗҫлекен йалсоветсен, колхозсен канашлӑвӗ

ШӐХАСАН. Августӑн йулашки кунӗсенче районра ӑмӑртса ӗҫлекен йалсоветсен, колхозсен, бригадӑсен, фермӑсен тата стахановецсен вырӑнсенчи канашлӑвӗсем пулса иртрӗҫ.

Уйкас Кипекри Тельман йачӗпе тӑракан колхозра пулнӑ канашлура Уйкас Кипек, Йенӗш, Вӑрман Йенӗш йалсовечӗсенчен—пурӗ 60 ҫын пулнӑ. Ҫав канашлу йалсоветсенче тата колхозсенче социалисӑмлӑ ӑмӑрту договӑрне мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пыни ҫинчен сӳтсе-йаврӗ.

Уйкас Кипекри Тельмӗн йачӗпе тӑракан колхоз йалхуҫалӑх ӗҫӗсене пахалӑхлӑн вӗҫлес тӗлӗшпе Вӑрман Кипекри Куйбышӗв йачӗпе тӑракан колхозпа ӑмӑртать. Икӗ колхозӗ те тырпулсене кӗске срукра, тӑккаламасӑр пуҫтарса кӗнӗ. Тельмӑн йачӗпе тӑракан колхозра тырпулсене пуҫтарса кӗнӗ ҫӗрте ҫӗнӗрен 25 стахановец палӑрнӑ. Ку колхоз государствӑна обйазательствӑ тӑрӑх тырпул парас плана 100 процентӗпех тултарнӑ. Натурплатӑ тыррине те парса татнӑ. Авӑн ҫапса пӗтернӗ. Колхоз государствӑ умӗнчи ытти обйазательствӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе те малта пырать. Аш-какай памали ҫулталӑкри плана 85 процент тултарнӑ.

Канашлура Тельмӑн йачӗпе тӑракан колхоз ӑмӑртура малта пыни курӑнчӗ. Куйбышӗв йачӗпе тӑракан колхоз йулса пырать-ха. Ку колхозра 115 гектар ҫинчи тырпула ҫапса тирпейленӗ. Апла пулсан та государствӑна тырпул тӑратмали плана 77 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Йенӗшри Максим Горький йачӗпе тӑракан колхоз „Красноармеец" колхозпа ӑмӑртать. „Красноармеец" колхоз ӑмӑрту договӑрне тӗплӗн тата вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртсе пырать. Ку колхоз пӑрҫа йышши культурӑсемсӗр пуҫне государствӑна тырӑ парса татнӑ. Кӗрхи тырӑсене ҫапса пӗтернӗ. Максим Горький йачӗпе тӑракан колхоз государствӑна тырӑ тӑратмали обйазательствӑна 29 процент ытларах кӑна пурнӑҫланӑ.

Йенӗш йалсовечӗн паха ӗҫӗ вӑл—ҫӗнӗ займ укҫине пӗтӗмпех тӳлесе татни пулать. Вӑрман Йенӗш йалсовечӗ те чылай ӗҫсемпе малта пырать.

Ваҫ. Чернов.

Ҫилос хывас плана тултармалах

Вылӑхсене хӗл вӑхӑтӗнче ҫитерме ҫителӗклӗ апат хатӗрлесси кашни колхоз умӗнче тӑракан задачӑ. Апат ҫителӗклӗ хатӗрленипе ҫеҫ вылӑхсене ӑнӑҫлӑн хӗл каҫарма пултаратпӑр. Сӗткенлӗ апатсенчен пӗри вӑл—ҫилос пулса тӑрать. Анчах пирӗн республикӑри колхозсем ҫилос хывса хӑварассипе пӗлтӗрхинчен те начар ӗҫлеҫҫӗ. Республикӗпе 120 пин тоннӑ ҫилос хывса хӑвармала пулнӑ пулсан, августӑн 20-мӗшне 8410 тоннӑ хывса, плана 7 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Уйрӑм районсем ҫилос хывма тытӑнман та. Акӑ, Вӑрнар районӗнчи колхозсен планпа 7 пин тоннӑ ҫилос хывса хӑвармала пулнӑ, мӗн пурӗ те 10 тоннӑ ҫеҫ хывнӑ. Ҫак районти колозсем хӗл ҫывхарса килнине пачах туймаҫҫӗ пулас. Республикӑри ытти районсем те ҫавнашкалах пит йапӑх ӗҫлеҫҫӗ. Ҫилос хывмали плана Тӑвай районӗ 1,9 процент, Шупашкар—3,6 процент, Ҫӗрпу—2,7 процент, Трак—5,8 процент, Турхан—8,7 процент, Сӗнтӗрвӑрри—6,4 процент, Хӗрлӗ Чутай-5,4 процент, Куславкка—2,9 процент. Канаш—4,6 процент, Ишлей—1,3 процент, Йӗпреҫ—3 процент, Вӑрнар-0,01 процент, Елӗк—6,1 проц. кӑна тултарнӑ. Кувакинӑ районӗн план тӑрӑх 3 500 тоннӑ ҫилос хывмала, ку вӑхӑтченех пӗр тонна та хывман.

Ҫилос хывас плана малта пыракан районсем те 19 процентран мала тултарайман.

Ҫак тӗлӗшпе республикӑ пысӑк хӑрушлӑхра. Ҫилос хывмали вӑхӑта колхозсем ахалех иртерсе йачӗҫ. Курӑксем нумай чухне ҫӗрулми аври ҫине шанса хывмарӗҫ. Ку ӗнтӗ райҫӗрӗҫпайӗсем колхозсене йертсе пыманнине пула, колхозсем ҫилос хывас ӗҫе хакламаннипе пулнӑ.

Республикӑра малта тӑракан колхозсем те ҫилос хывма тытӑнман. Ишекри (Ишлей районӗ) Сталин йачӗпе тӑракан колозӑн 250 тоннӑ ҫилос хывса хӑвармала пулнӑ, пайанхи кун тӗлне пӗр тоннӑ та хывман.

Райҫӗрӗҫпайӗ колхоза план тахҫанах ҫитерсе панӑ, анчах ӑна колхоз правленинче ӗҫлекенсем тытса пӑхман. Вӑл хутсем хушшинче шкафра выртнӑ. Халь ӗнтӗ Ишек колхоз правлени ҫӗрулми авринчен ҫилос хывса хӑварма шутлать. Пӗтӗм республикӑшӑн паллӑ Кирӑв йачӗпе тӑракан (Атнаш, Шӑхасан районӗ) колхоз та пӗр тоннӑ ҫилос хывман.

Ҫилос хывассипе тӑрӑшса ӗҫлекен колхозсем те пур. Ҫӗрпӳ районӗнчи „Коминтерн" колхоз—15 тоннӑ, „Машинстрой" колхоз 19 тоннӑ, „Хӗрлӗ Герой" колхоз 21 тоннӑ, „Коммунар" колхоз 22 тоннӑ, „Хӗрлӗ Перекоп" колхоз 17 тоннӑ ҫилос хывса плана тултарнӑ.

Ҫилос хывассине йалхуҫалӑхӗн ытти ӗҫӗсемпе таччӑн ҫыхӑнтарса пырас пулать. Пӗр ӗҫе туса теприне кайа хӑвармала мар. Халь ҫулӑҫсенчен, курӑксенчен ҫилос хывса хӑварма май пур. Ҫитес вӑхӑтсенче ҫӗрулми аврисенчен те ҫилос хывса хӑварма пулать. Ҫавӑнпа та кашни колхозӑн ҫилос хывассипе ҫине тӑрса ӗҫлемеле. Ҫителӗклӗ апат хатӗрлени—йышлӑ вылӑх-чӗрлӗхшӗн кӗрешни пулать. Ҫакна пӗр минутлӑха та манмала мар.

Пысӑк пахалӑхпа акнӑ

ПАТӐРЙЕЛ. Нӗркеҫри Шмидт йачӗпе тӑракан колхоз кӗрхи тырӑсене пысӑк пахалӑхпа акса хӑварчӗ. 225 гектар ҫине „Авангард" текен суртлӑ ыраш, 45 гектар ҫине „Дюрабль" тата „Симбилеевский" текен суртлӑ тулӑ вӑрлӑхӗсемпе акса хӑварнӑ. Ҫак вӑрлӑхсене пӗтӗмпех типӗле майпа вутпуҫҫирен чӳхесе, ҫейӑлкӑсемпе акнӑ.

Кӗрхи тырӑсене акмали лаптӑк ҫине малтан 2.540 лав тислӗк, 65 центнӗр минераллӑ имҫамсем кӑларса семҫетнӗ.

Кӗракине пӗтернӗ хыҫҫӑн пур колхозниксем те авӑн ҫапас ӗҫе хутшӑнчӗҫ. Ҫак кунсенчех авӑн ҫапса пӗтереҫҫӗ.

Н. Квасӑв.

Харьковӑв ҫар округӗнчи Н-чаҫӗнчи ҫар ӗҫне тата политикӑна вӗренессинчи отличник-комсомолӗцсем А. Ф. Романенко тата А. В. Задорожный йулташсем, политрук заместителне лартнӑскерсем, Хӗрлӗ Ҫарта ӗмӗрлӗхех хӑварма ыйтса заявлени панӑ.
ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: А. Ф. Романенко (сулахайра), тата А. В. Задорожный комсомолӗцсем чаҫ лагерӗнче.

В Малышӗв фото ӳкерчӗкӗ (Союзфото).

Учителсен районри канашлӑвӗ

ВӐРНАР. Августӑн 21—23-мӗшӗсенче, виҫӗ кун хушши, учителсен районри канашлӑвӗ пулса иртрӗ.

Канашлу икӗ ыйту: тӗнчери лару-тӑру ҫинчен тата иртнӗ вӗренӳ ҫулӗн итогӗпе шкулсем ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне йепле хатӗрленни ҫинчен сӳтсе-йаврӗ.

Малтанхи ыйтуна ПСК(б)П райкомӗн культурӑпа пропагандӑ пайӗн пуҫлӑхӗ Скворцов йулташ доклачӗ пулчӗ. Доклад хыҫҫӑн учителсенчен нумайӗшӗ тухса каларӗҫ.

— Кирлӗ пулсан, партипе правителствӑ тата пирӗн йуратнӑ ҫулпуҫӑмӑр Сталин йулташ пире чӗнсен, пирӗн алӑра кӗнекесем вырӑнне винтовкӑсем пулӗҫ. Вара епӗр хамӑрӑн ҫирӗппӗн те ҫирӗп Хӗрлӗ Ҫарпа пӗрле тӑшмана хӑйӗн ҫӗре синчех ҫапса салатӑпӑр,—терӗ Йефимӑв хӑйӗн сӑмахӗнче. Ҫак сӑмахах каларӗҫ ытти тухса калаҫакан учителсем те.

Канашлу иртнӗ вӗренӳ ҫулӗн итогӗпе шкулсем ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне йепле хатӗрленни ҫинчен районри ҫутӗҫ пайӗн пуҫлӑхӗн Л. Йефимӑв йулташ докладне сӳтсе йаврӗ.

Прение 17 ҫын тухса каларӗҫ. Анчах тухса калаҫакансенчен нумайӗшӗ иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерессия ҫинчен тата кӑҫалхи вӗренӳ ҫулне мӗнле кӗтсе илни ҫинчен сахал чарӑнса тӑчӗҫ.

Районӗпе илсен, иртнӗ вӗренӳ ҫулне лайӑх вӗҫлес тӗлӗшпе уйрӑмӑнах туллимар вӑтам шкулсем начар ӗҫленӗ. Вӗренӳ ҫулӗ пӗтнӗ ҫӗре туллимар вӑтам шкулсенче вӑтам вӗренекенсен шучӗ 82,4 процент ҫеҫ пулнӑ.

Ҫав вӑхӑтрах пуҫламӗш шкулсенче 91,5 процент, вӑтам шкулсенче—94,7 процент пулнӑ. Туллимар вӑтам шкулсенче вӗренӳ ҫулӗ пӗтнӗ тӗле 7634 ача вӗреннӗ, вӗсенчен тепӗр класа куҫарнисемпе вӗрентсе кӑларнисем 7077 ача ҫеҫ, 557 ачана иккӗмӗш ҫул вӗренме ҫав классенех хӑварнӑ.

Районра лайӑх ӗҫлесе пыракан шкулсемпе учителсем те сахал мар. Мӑнйал Елменти пуҫламӗш шкулта 2-мӗш класпа П. Ваҫилйӗв, 4-мӗш класпа А. Ваҫилйӗвӑ учительницӑсем ӗҫленӗ. Весем хӑйсен ӗҫне йуратаҫҫӗ. Ачасен пӗлӳне хӑпартас тӗлӗшпе мӗн май килнӗ таран тӑрӑшнӑ, кашни ачапа уйрӑм ӗҫлесе пынӑ. Ҫавна пула А. В ҫилйӑвӑ учительницӑ вӗрентекен 4-мӗш класри 33 ачаран пурте вӗренсе тухнӑ. Ҫавӑн пекех Сӑкӑтри пуҫламӗш шкул, Вӑрнарти вӑтам тата туллимар вӑтам шкулсем, Кӳстӳмӗр, Кӳлхӗрри, Йангорчинӑ туллимар вӑтам шкулӗсем те лайӑх ӗҫлесе пынӑ.

Ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр шкулсем чӑтма ҫук начар ӗҫленӗ. Чӑрӑш Хирлепри туллимар вӑтам шкулта (директӑрӗ Калинин) 6 мӗш класри 52 ачаран 7-мӗш класа 17 ача куҫайман Хапӑсри туллимар вӑтам шкулта 5-мӗш класри 44 ачаран 6-мӗш класа 22 ачана куҫарман. Кунти учителсем нумайӗшӗ ӗҫке йерсе кайнӑ. Козлов учител Нурӑс пасарӗнче ним пӗлми ӗҫнӗ те, Нурӑсри столовӑй алӑкӗсене ҫапса ватма пикеннӗ.

Йершенуҫӗнчи пуҫламӗш шкулти (заведуйушчийӗ Чумаков) учителсем ачасене коммунисла воспитани парассипе ҫителӗклӗ ӗҫлемен. Башуйевӑпа Павлӑвӑ учительницӑсем класра ачасене вӗрентнӗ вӑхӑтрах пукансемпе ҫапӑҫкаланисем пулнӑ.

Рунгӑри пуҫламӗш шкулти учител пӗрремӗш класра вӗреннӗ виҫӗ ачана ҫулталӑк хушшинче вулама та, ҫырма та вӗрентеймен. Шкул заведуйушчийӗ Горбунов ку ачасен пӗлменлӗхне вӗсем шкула ҫамрӑкла пыни ҫине йӑвантарасшӑн пулнӑ. Анчах ӗҫ йӑлтах урӑхла пулнӑ. Учител ку ачасемпе сахал ӗҫленӗ, вӗсен килти условисене кайса пӗлессишӗн тӑрӑшман.

Районра учителсем заочнӑ вӗренес ӗҫ те начар, 1935 ҫултанпа педагогикӑ институтӗнчен 1 учител ҫеҫ заочнӑ вӗренсе тухнӑ. Хӑшпӗрисем 3—4 ҫул хушши ӗнтӗ 1-мӗш курсрах заочнӑ вӗренеҫҫӗ. Санарпуҫӗнчи туллимар вӑтам шкулти Моиҫейӗв, Туҫи-Мӑратри Захарӑв, Чӑрӑш Хирлепри Калинин, Хапӑсри Ҫидӑрӑв т. ыт. учителсем те 1935 ҫултанпах педагогикӑ институтӗнче 1-мӗш курсра заочник шутӗнче тӑраҫҫӗ.

Кӑҫалхи вӗренӳ ҫулӗнче районри шкулсенче 9833 ача вӗренмелле. Ачасене вӗренме лайӑх та таса, ҫутӑ шкулсем кирлӗ. Анчах та хӑшпӗр шкулсем пайанхи куна ҫитсе те ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленсе ҫитмен-ха. Уравӑшри туллимар вӑтам шкулта (директӑрӗ Ваҫилйӗв) пӗр клас валли партӑ ҫитмест, доскасене сӑрлаттарман, вӗренӳре кирлӗ хатӗрсем ҫителӗклӗ таран илсе хуман. Иртеменкассинчи пуҫламӗш шкулта партӑсем ҫӗмӗрӗлсе пӗтнӗ. Ҫӗнӗрен тума халь ҫеҫ заказ панӑ. Кӑкшӑмри пуҫламӗш шкулӑн пӗр клас валли ҫурт тумала, кӑмакасене йусаман, кантӑксене лартман.

Йанкорчинӑри, Кӳстӳмӗрти, Кольцовкари туллимар вӑтам шкулсемсӗр пуҫне, нихӑш шкулӑн та ҫителӗклӗ таран вутӑ ҫук. Районри ҫутӗҫ пайӗ вӑрманта вутӑ ҫукки ҫине персе, вутӑ ҫителӗклӗ хатӗрлес ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхнӑ. Ҫавна пула пайанхи кунта шкулсем вутӑсӑр лараҫҫӗ.

Ҫт. Улангай.

Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланас умӗн

ЕЛӖК. Йӳҫкассинчи вӑтам шкул (директӑрӗ Золатӑв) химипе физикӑ кабинечӗсем валли тӗрлӗрен приборсем 4 пин тенкӗлӗх илме палӑртнӑ пулнӑ. Халӗ 2 пин тенкӗлӗх илнӗ, ыттине ҫак кунсенчех илеҫҫӗ. Тетрадсем, кӑранташсем кашни ача пуҫне 18-шар илсе хунӑ. Вутӑ хӗл каҫиччenех хутма ҫитет, 250 кубла метр кӳнӗ, расписанисем тунӑ.

Крымсарайкӑри чиркӗве пӑсса шкул тумала пулнӑ. Стройматериалсене те ҫителӗклех кӳнӗ, анчах шкула халиччен те туса пӗтереймеҫҫӗ. Хирлеппуҫӗнчи шкул ҫуртне 85 процента йахӑн кӑна тунӑ. Самообложени укҫинчен 112 пин тенкине шкул строителствине расхутлама пӑхнӑ, вӑл укҫана районри финанс пайӗ памасӑр тӑрать. Пайанхи куна шкулсем 18 пин тенкӗ ҫеҫ илнӗ. Ҫавна пула чылай шкулсенче ремонт ӗҫӗ чарӑнса тӑрать.

В. Йефремӑв.

КУСЛАВККА. Ҫатракассинчи туллимар вӑтам шкулта кӑҫал 305 ача вӗренмелле. Виҫҫӗмӗш класӑн пӳлӗм ҫитменнипе 2-мӗш сменӑра вӗренмеле пулать. Ҫырмали хатӗрсем ҫитеҫҫӗ. Шкул учебниксем ҫителӗклӗ илеймен-ха.

Шкулӑн тата химипе физикӑ кабинечӗсем валли тӗрлӗрен приборсем чылай илмеле. Анчах тивӗҫлӗ организацисем шкула укҫа тенкӗ памасӑр тӑраҫҫӗ.

Е. Картӑшов.

Планериссен шкулӗнчен вӗренсе тухрӗҫ

Канашри вакунсем йусакан савӑтри вакун маҫтӑрӗ Барамышникӑв, вакунсене йусама илес ӗҫри инструктӑр Йегорӑв йулташсем ӗҫрен уйрӑлмасӑрах планериссен шкулӗнчен вӗренсе тухрӗҫ.

Халӗ вӗсем аероклуба летчиксен шкулне вӗренме кӗме хатӗрленеҫҫӗ.

П. Ҫергейӑв.

Кӗвӗсен ӑсти

Иртемен Кушкӑ йалӗнчи (Канаш р.) Иван Стеланӑв хӑй тунӑ пӗр метр тӑршшӗ, 12 сӗрувлӑ балалайкӑпа питӗ чаплӑ выльать. Вӑл пӗтӗмпе 30 кӗвӗ-йурӑ выльама пӗлет. Тӗрлӗ уйавсенче, черӗсенче йалан балалайкӑпа тухса выльаса парать.

Г. Федотӑв.

Йунлӑ террор тыткӑнӗнче

(Франко генерал тылӗнче)

Испани халӑхӗн ирсӗр тӑшманӗ, йунлӑ генерал Франко хӑйӗн пӗр сӑмахӗнче ҫапла каланӑ: „хамӑр тӗллеве пурнӑҫлас тесен, Испани халӑхӗнчен ҫуррине пӗтерессипе чарӑнса тӑмала мар",—тенӗ.

Франко генералӑн тӗллевӗ паллӑ. Вӑл Испанине тата унӑн пуйанлӑхне Италипе Германи фашисӑмне парасшӑн. Ҫакӑн пек тӑвас тесе, Испани пӑлхавҫисемпе Итали тата Германи интервенчӗсем фронтри тата ҫавӑн пекех хӑйсен тылӗнчи Испани халӑхӗн чи лайӑх пайӗсене пӗтерсе пыраҫҫӗ.

Франко генерал Италипе Германи интервенчӗсем пулӑшнипе тытса илнӗ Испани провинцисенче тискеррӗн ашкӑнать. Унта халӑхсене нихҫан илтмен йӗркесемпе пусмӑрлаҫҫӗ, мӑшкӑлаҫҫӗ, фашиссен хӗҫпӑшаллавнӑ банди нимӗн айӑпсӑрах ҫынсене вӗлерет.

Хӗвеланӑҫ Йевропӑ хаҫачӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх, пӑлхавҫӑсем тытса илнӗ Испани хулисенчи предприйатисенче рабочисене кунне 10—12 сехет ӗҫлетереҫҫӗ. Рабочисене тытса ӗҫлеттерес, вӗсене ӗҫрен кӑларса йарас тата ӗҫ охранипирки калакан пур саккунсене те пӑрахӑҫа кӑларнӑ. Кӑнтӑр провинцисенче пур рабочисене те „политикӑ тӗлӗшӗнчен шанчӑксӑр" текен уйрӑм списока кӗртнӗ. Ҫав спискӑсенче кашни хушамат хыҫҫӑн, „хӑрушӑ", „сӑнаса тӑнипе пурӑнать", „республиканецсем майлӑ" тесе ҫырнӑ. Рабочисене сӑнасси-Германи тата Итали фашисӗсен йӗркипе йулса пырать. Рабочисене вӑйпах фашисла организацисем йертсе пыракан фашисла профсойузсене ҫыраҫҫӗ. Рабочисем хушшинче вӗреслесси кашни кун тенӗ пекех пулса иртет. Севилйа, Кадикс, Кордовӑ, Ла Линеа хулисенче фашиссем икӗ ҫул хушшинче республикӑлӑ Испани майлӑ пулнӑ рабочисене пиншер ҫынна вӗлерні тата асаплантарнӑ.

Хальӗ кӑнтӑр Испанири концентрацилӗ лагерӗсенче 300 пин ҫынна хупса лартнӑ. Вӗсене ҫав тери йӑвӑр условисенче тытаҫҫӗ. Хупса лартнисенчен чылай рабочисене талӑкра 14-шар сехет тата ытларах та Италипе Германи ҫар влаҫӗсен заданийӗ тӑрӑх ҫулсем тунӑ ҫӗрте ӗҫлеттереҫҫӗ.

Ла Линеа хулинче йатарласа тунӑ тӗрме пур. Ҫав тӗрмене баск халӑхне хупса тултарнӑ. Вӗсене унта Ҫурҫӗр Испанинчен Италипе Германи интервенчӗсем баск тата Астури ҫӗршывӗсене йышӑннӑ хыҫҫӑн илсе пынӑ. Нумай баскене Ла Линеа хулине илсе пынӑ чухне ҫул ҫинче тата хулара персе пӑрахнӑ. Чӗрӗ йулнисене пӑлхавҫӑсен влаҫӗсем „чылай хӑрушӑ елемент", тесе шутлаҫҫӗ. Пӑлхавҫӑсем тытнӑ баскисенчен нумайӗшӗсем Италипе Германи фашисӑмӗ вӗсен ҫӗршывне тытса илнине хирӗҫ кӗрешнӗ тата малалла хӑйсен ирӗклӗхӗшӗн, никама пӑхӑнмала марришӗн кӗрешесси ҫинчен паттӑррӑн пӗлтернӗ.

Ҫурҫӗр Испанинче йунлӑ фашисла террор ашкӑнать. Испанин ҫурҫӗр ҫыранӗсене тытса илнӗ хыҫҫӑн, фашиссен вӗсен шухӑшӗпе республиканецсен ретӗнче тӑнӑ тата вӗсем майлисене—баскӗсемпе астурийецсене кашнинех вӗлернӗ. Бильбао хулинче вӗсем республиканецсене пӑвса вӗлернӗ. Фашисла палачсем республиканецсен мӑйне тимӗр унка тӑхӑнтарнӑ, унтан йатарласа тунӑ винтӑпа йеришен пусса хӗстернӗ. Ҫакӑн пек йӗркепе Испанире вӑтам ӗмӗрсенчи корольсем ҫеҫ усӑ курнӑ.

Ҫак ҫулхи йанвар уйӑхӗнче пӗр Бильбао хулинче кӑна тата ҫавӑнпа йунашар пысӑк мар хулара Италипе Германи ҫарӗсен тата пӑлхавҫӑсен ҫар трибуналӗсем 900 ҫынна вӗлермеле тунӑ.

Сантандерти (Ҫурҫӗр Испанире) йунлӑ фашиссен аллинчен тарнисем хӑйсем курнисем ҫинчен каласа панӑ тӑрӑх, хулари пур пысӑк ҫуртсене тата площадкӑсене тӗрмесем, концентраци лагерӗсем тунӑ.

Хресченсене хуларисенчен те ытларах хӗсӗрлеҫҫӗ. Басас йалӗнче (хӗвелтухӑҫ фрончӗ) фашиссем тыткӑна илнӗ республиканецсене тата ҫав йалта пурӑнакан ҫитӗннӗ арҫынсене площӗте пухса, вӗсене ҫарамаслантарса темиҫешер сехет хушши сивӗре тӑратнӑ, ун хыҫҫӑн вӗсене кӗтессене майлаштарса лартнӑ та виҫӗ пулеметран персе вӗлернӗ.

Парижре тухса тӑракан „Корреспонданс Энтернасиональ" йатлӑ журнал пӗлтернӗ тӑрӑх, фашиссем хӑйсем пӗр ҫул хушши пуҫ пулса тӑнӑ вӑхӑтра пӗр Севилйа провинцинче кӑна 100 пин ҫынна тискеррӗн вӗлернӗ.

Уеска провинцинчи Серро де Акдекаба йалӗнчи пур ҫынсене те пӑлхавҫӑсем вӗлерсе, йалне сунтарса йанӑ. Кун хыҫҫӑн хӗрес лартнӑ. Унта ҫапла ҫырнӑ пулнӑ: „фалангиссем ҫӗмӗрсе тӑкнӑ хӗрлӗ йал пулнӑ". Сан Рак йалӗнче (Кадикс провинцийӗ) пӑлхавҫӑсем ҫамрӑк хресченне—фашиссене хирӗҫ тӑракан Франциско Санчеса йатлӑ хӗрачана малтан хӗрес ҫумне ҫапса лартнӑ, кайран персе вӗлернӗ.

Ҫӗршер пин хресчен ҫемйисем кил-ҫуртсӑр тӑрса йулнӑ. Барҫелонӑ хулинче тухса тӑракан „Сервис эспаньол д'энформасьон" йатлӑ бюллетень ҫырса пӗлтернӗ тӑрӑх, пӑлхавҫӑсен влаҫӗсем йатарласа саккун кӑларнӑ. Ҫав саккун тӑрӑх, республиканецсем майлӑ тӑракан тата фашисла йӗркепе килӗшмен хресченсен ҫӗрӗсене тата пурӑнмали ҫурт-йӗрӗсене туртса илеҫҫӗ. Ҫав хресчинсенчен туртса илнӗ ҫӗрсене кайала тавӑрнӑ помещиксене йе Испанине „ҫӗрсем" йачӗпе витӗнсе пынӑ Итали тата Германин хӗҫпӑшалланнӑ фашисла кулак колонизатӑрӗсене сутаҫҫӗ. Республикӑлӑ Испани правителствине пӗлтернӗ тӑрӑх, фашиссемпе интервентсем тытса илнӗ территорисенче фашисла йӗркепе килӗшмен Испани вак хуҫалӑхлӑ хресчинсенчен туртса илнӗ ҫӗр лаптӑкӗ Малагӑ провинцинче—284 пин гектар, Кордовӑ провинцинче—180 пин гектар, Севильӑ провинцинче—245 пин гектар, Уельса провинцинче—172 пин гектар шутланать.

Хӑйсен ҫӗрӗсенчен хӑваласа йанӑ чухӑн хресченсенчен пӗр пайне республиканецсем майлӑ тесе персе вӗлернӗ, нумайӗшӗсем тӗрмесенче тата концентраци лагерӗсенче ларaҫҫӗ. Вӗсен ҫемйисем, ӗлӗкхи вӑхӑтра хӑйсен пӗчӗк лаптӑк ҫӗрӗсем пур чухне те выҫӑ лараскерсем, халь ӗнтӗ кил-ҫуртсӑр, унта кунта ҫапкаланса пурӑнаҫҫӗ, выҫлӑхпа асапланаҫҫӗ.

Франко бандит туса иртерекен пур йунлӑ хӑрушлӑхсем те Испани паттӑр халӑхӗн вӑй-хӑватне пӗтерме пултараймаҫҫӗ.

Франко тылӗнче партизанла йун хӑм вӑйланнӑ ҫӗмӗн вӑйланса пырать. Испани партизанӗсем пӑлхавҫӑсемпе интервентсен тылӗсене вайлӑн ҫӗмӗреҫҫӗ. Тулли мар сведени тӑрӑх, иртнӗ ҫулти малтанхи тӑхӑр уйӑх хушшинче партизансем пӑлхавҫӑсем йышӑннӑ территоринче 156 ҫар поезне, 150 автомобиле, 7 кӗпере, 2 тар складне ҫӗмӗрнӗ тата фашиссемпе интервентсене—15 пин ҫын ытларах вӗлернӗ тата амантнӑ.

Астури, Пиреней тӑвӗсенче тата Андалузинче (Кӑнтӑр Испанире) партизанла йухӑм кӑҫал чылайах вӑйланнӑ. Фашисла захватчиксем тата вӗсене пулӑшакан Франко тунӑ фашисла йӗркепе килӗшменни пӑлхавҫӑсен ҫарӗсен хушшинче те сарӑлса пырать. Йулашки иквиҫ уйӑх хушшинче пӑлхав пуҫлӑхӗсене тата Италипе Германи интервенчӗсене хирӗҫ хӗҫпӑшаллӑ восстанисем тата загӑварсем Тетуен, Сеутӑ, Мелильӑ (Испани Марокки), Авильӑе, Касерес (ҫӗршывӑн центрти пайӗсенче), Сан-Себастйан, Памплон, Сарагосӑ (Ҫурҫӗр Испанире) хулисенче пулса иртнӗ. Сеутӑ хулинче фалангиссемпе марокканецсем хушшинче—Испанири фронта кайасшӑн мар салтаксем тытӑҫсах ҫапӑҫнӑ. Ҫав ҫапӑҫу пӗр талӑк хушши пынӑ. Андалузи, Кадикс, ҫавӑн пекех Сан-Себастйан, Сарагоссӑ хулисенче пӑлхавҫӑсен ҫарӗнчи Испани чаҫӗсем алла хӗҫпӑшал тытса хирӗҫ тӑнӑ. Ҫав пур восстанисем те Франкона, Италипе Германи интервенчӗсене хирӗҫ пулнӑ. Вӗсене йатарласа уйӑрнӑ карательни отрядсем пысӑк хӗнпе путарнӑ.

Республикӑлӑ Испани йеңчӗн ҫирӗппӗн тӑни кунран-кунах йунлӑ терропа тытӑнса тӑракан пӑлхавҫӑсен тылне йухӑнтарса пырать.

Испани ҫӗрӗ Франко генерал тата унӑн хуҫисем—Италипе Германи урисем айӗнче ҫунать.

ПАРТИ ПУРНӐҪӖ

Парткабинет ӗҫне тӗпренех ҫӗнетмеле

Шупашкарта районри парткабинет пуҫлӑхӗсен канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлу „Республикӑра партилӗ пропагандӑ ӗҫӗ мӗнле пыни ҫинчен тата вӑл ӗҫе лайӑхлатмалли майсем ҫинчен" ПСК(б) Парти Обкомӗ 1938 ҫ. апрелӗн 9 мӗшӗнче йышӑннӑ постановленине районри парткабинетсем мӗнле пурнӑҫласа пынине пӑхса тухрӗ.

Парти Обкомӗн постановленине пурнӑҫлас тӗлӗшпе хӑйсем мӗнле ӗҫлесе пыни ҫинчен парткабинет пуҫлӑхӗсем тухса каларӗҫ.

Районра парти вӗренӗвне кирлӗ пек организацилесе йӑрасси вӑл—парткабинет мӗнле ӗҫлевинчен те нумай килет. Парткабинет пропагандиссене зањатисене хатӗрленме пулӑшмала. Пропагандиссене пухса ҫеминарсем, консуљтацисем туса иртермеле, зањатисенче пулса кирлӗ пулӑшу памала.

„Зањатисем чылай чухне ҫийелтен, йачӗшӗн кӑна пулса иртеҫҫӗ. Вӗренекенсем зањатине хатӗрленсе пыман, пропагандис хӑй те зањатине кирлӗ пек хатӗрленмен," тесе калама пӑхаҫҫӗ парткабинетра ӗҫлекен хӑшпӗр йулташсем. Урӑхла каласан—районра партвӗренӳ начар пынине пӗтӗмпех пропагандиссем ҫине йӑвантарма шухӑшлаҫҫӗ, парткабинетра ӗҫлекенсем пӗр ответсӑр айаккинче тӑрса йулаҫҫӗ. Парти райкомӗсем те чылай вӑхӑтра парти вӗренӗвне кирлӗ пек организацилессинчен айакра тӑраҫҫӗ. ПСК(б)П Шӑнкӑртам райкомӗ пӗлтӗрхи декабӗр уйӑхӗнчен пуҫласа, пайанхи куна ҫитиччен парти вӗренӗвӗ мӗнле пыни ҫинчен пӗр отчот та итлемен, пропагандиссен тата парткабинет ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене палӑртса, вӗсене кӗске вӑхӑтра пӗтерме пулӑшман. Патӑрйел, Ишлей, Елӗк райкомӗсем те парти вӗренӗвӗпе сахал интересленнӗ.

Парткабинет пуҫлӑхӗсем нумайӗшӗ тӑрӑшса ӗҫлесе ӗҫе лайӑхлатасшӑн, анчах вӗсен опыт, пӗлни ҫителӗксӗр пирки ҫитменлӗхсем пулса пыраҫҫӗ. Тӗслӗхшӗн, Шӑмӑршӑ районӗнчи парткабинет пуҫлӑхне Чудаков йулташах илер. Вӑл ӗҫе йӗркелеме тӑрӑшакан ҫын. Анчах унӑн ӗҫри опычӗ ытла та ҫителӗксӗр. Паллах ӗнтӗ, ӑна вӗрентсе ӗҫре ҫитӗнтерсе пымала. Ӗҫре вӗрентсе, пулӑшса пымали йулташсем татах та пур. Варнар районӗнчи парткабинет пуҫлӑхӗ Воњникӑв йулташ ҫапла каларӗ:

— ПСК(б) Парти Обкомӗ парти вӗренӗвӗ ҫинчен йышӑннӑ постановленине пурнӑҫлассишӗн тӑрӑшса ӗҫлесе пыратӑп. Пропагандиссене, агитатӑрсене пуҫтарса консуљтацисем, ҫеминарсем иртеретӗп. Кружок зањатийӗсенче пулса, вӑй ҫитнӗ таран пропагандиссене пулӑшатӑп. Ҫавӑнпа пӗрлех манӑн хамӑн та вӗренмеле. Епӗ халӗ Ленин—Сталин произведенийӗсене вӗренетӗп. Вӗреннӗ чухне ӑнланман ыйтусем сикесике тухаҫҫӗ. Ыйтса пӗлесчӗ — районра никамран та ыйтма ҫук...

Парткабинет пуҫлӑхӗсене уйӑхра йе икӗ уйӑхра пӗр хут Шупашкара пуҫтарса консуљтацисем туса иртерсе пырсан, питӗ те лайӑх пулмала. Анчах парти Обкомӗн агитаципе пропагандӑ пайӗнче ӗҫлекенсем пире ку ӗҫре кирлӗ пек пулӑшу парса пымаҫҫӗ-ха".

Канашлура тухса калаҫакансем нумайӗшӗ кружоксемпе шкулсене вӗренме илнӗ йултӑшсем пӗлӳ тӗлӗшӗнчен пӗр пек пулманни ӗҫре чӑрмантарса пыни ҫинчен каларӗҫ. Пӗлӳ тӗлӗшӗнчен пӗр пек марри вӗренекенсен заңатине ҫӳресе вӗренес интересне пӗтерсе ларт̆т̆. Йалти шкулра икӗ ҫул вӗреннӗ ҫынпа 7—8 ҫул вӗреннӗ ҫын пӗр кружокра пулсан, паллах ӗнтӗ, йалта икӗ ҫул вӗреннӗ ҫын веренӳре ӗлкӗреймест, йулса пырат̆. Малашне кружоксенче вӗренекенсене пӗлӳ тӗлӗшӗнчен пӗр пеккисене суйласа илмеле.

Нумай пропагандиссем парти историне, ленинисӑма вӗрентме методикӑ тӗлӗшӗнчен питӗ начар хатӗрленнӗ. Ҫапла пулин те, ПСК(б)П Обкомӗн партилӗ пропагандӑпа агитаци пайӗ пропагандиссене методикӑна вӗрентесси ҫине ҫителӗклӗ таран ҫавӑрӑнса пӑхман. Пропагандиссен 3 уйӑхлӑх курсӗнче методикӑна 8 сехет кӑна вӗрентнӗ.

Пропагандиссемпе районри парткабинет пуҫлӑхӗсем хӑйсен кулленхи ӗҫӗнче илемлӗ литературӑна вуласа вӗренсе пымала. Кружоксенче, шкулсенче заңатисем иртернӗ чухне илемлӗ литературӑна ҫыхӑнтарса вӗрентни кирлӗ.

Политкружоксемпе шкулсенче вӗрентнӗ чухне вырӑнти материалсемпе усӑ курса, вырӑнти тӗслӗхсене кӑтартса вӗрентни питӗ усӑлӑ. Патша вӑхӑтӗнче рабочисемпе батраксем, чухӑн тата вӑтам хресченсем нумай хӗн-хурсем курса пурӑннине фактсемпе кӑтартмала. Анчах пропагандиссемпе парткабинетсем ҫак материалсемпе усӑ курмаҫҫӗ ха.

Елӗк, Тӑвай, Шупашкар районӗсенчи парткабинетсем хӑйсен ӗҫӗсене план тӑрӑх туса пыман. Малашне парткабинетсен ӗҫне план тӑрӑх йӗркелесе йани кирлӗ. Парткабинетсем пропагандиссене, агиткоккектив руководителӗсене, уйрӑм коммунниссене тата партире тӑман активиссене куллехи ӗҫре пулӑшса пыракансем пулса тӑмала.

Н. Косойкин.

Парткабинетри консуљтаци

ЙӖПРЕҪ. Партин иккӗмӗш сьеҫӗ пулса иртни 35 ҫул тултарнӑ май, парткабинетра выставкӑ тата консуљтаци организацилене. Кунта кашни кунах, каҫхине 6 сехетрен пуҫласа 9 сехетчен, коммунисем консуљтацинче пулса партин иккӗмӗш сьеҫӗн ӗҫӗсем ҫинчен вулаҫҫӗ, ӑнланман ыйтусене ыйтса пӗлеҫҫӗ.

Августӑн 19 мӗшӗнче, районри клубра, партин районри активӗн пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пухура Ийевлӗв йулташ партин иккӗмӗш сьеҫӗ 35 ҫул тултарни ҫинчен доклад туса пачӗ. Пуху активлӑ иртрӗ.

Стаханӑвла йухӑм пуҫланни виҫӗ ҫул тултарас умӗн

Производствӑри ҫӗкленӳ

ҪӖМӖРЛЕ. „Бољшевик" савӑт коллективӗ стаханӑвла йухӑм пуҫланни виҫӗ ҫул тултарнине ҫӗнӗ ӳсӗмсем тунипе кӗтсе илет. Августӑн 20 мӗшӗнче савӑт пӗр кунхи плана 103,8 процент тултарнӑ.

Плана тултарас йенӗпе иккӗмӗш бригадӑ (сменӑ маҫтӑрӗ П. Миронав) малта пырат̆. Вӑл производства планне йалан тултарат̆. Августри 21 кун хушшинчи плана 103,9 процент пурнӑҫа кӗртнӗ.

Стаханӑвӗҫсем: Иван Краснов нормӑна 174 процент, А. Никонорӑв 150 процент, В. Смирнов 150 процент таран тултарса пыраҫҫӗ т. ыт. те. Халӗ савӑтра социалисӑмлӑ ӑмӑрту догӑвӑрӗсене тӗрӗслесе, ҫӗнӗрен догӑвӑрсем тӑвасси пырат̆.

Иваницкий.

Ҫамрӑксем хӑйсен квалификацине ӳстереҫҫӗ

Шупашкарти ҫӗнӗ стройкӑра пуринчен ытларах ҫамрӑксем ӗҫлеҫҫӗ. Стройкӑн пур участкинче те ҫамрӑксен хастарлӑ ӗҫне курма пулат̆. Акӑ Толстов бригадине илер. Унан бригадинче 18 ҫын ӗҫлет, вӗсем пурте ҫамрӑксем.

Бригадӑ хәлӗ нормӑна 130—160 процент тултарса пырат̆. Уйрӑмах илсен, Никитин 180 процентран кайа мар, Лукин 150 процент тултараҫҫӗ. Ҫамрӑксем стройкӑра стаханӑвла ӗҫлене вӑхӑтрах техникӑна вӗренес тӗлӗшпе те лайӑх тӗслӗхсем параҫҫӗ. Бригадӑ членӗсем пурте каменщиксем йе тата слесӑрсем хатӗрлекен курссене вӗренме ҫӳреҫҫӗ.

В. Д.

Стаханӑвла ӗҫ

КАНАШ. Вакунсем йусакан савӑтри рабочисемпе инженерлӑ-техникла работниксем стаханӑвла йухӑм виҫӗ ҫул тултарнине производствӑра ӳсӗмсем тунипе кӗтсе илеҫҫӗ. Инструментаљнӑй цехри токӑр Степанӑв, слессӑр Грачов тата рессорсемпе пружинсем тӑвакан цехри Трунӑв йулташсем нормӑна 230 процент таран тултарса пыраҫҫӗ.

Трунӑв йулташ хӑйӗн ӗҫӗсем ҫинчен ҫапла калат̆: Епӗ савӑтра 1937 ҫултанпа ӗҫлетӗп. Ҫак хушара профессилӗ рабочи пултӑм. Стаханӑвла йухӑм мана ӗҫ ҫине ҫӗнӗле пӑхма, йаланах тимлӗн ӗҫлеме вӗрентрӗ. Ҫавӑнпа епӗ стаханӑвӗҫ пултӑм. Стаханӑвла йухӑм пуҫланни виҫӗ ҫул тултарнине епӗ нормӑна 300 процент таран тултарса ӗҫлеме тытӑннипе кӗтсе илетӗп.

Д. Иванов.

Кирпӗч производствине йухӑнтараҫҫӗ

ВӐРМАР. Аслӑ Чакри Карл Маркс йачӗпе тӑракан колхозра 1930-мӗш ҫулта кирпӗч тӑвакан производствӑлӑ ушкӑн организациленӗччӗ. Ҫак производствӑ иртнӗ ҫулсем хушшинче плана ӑнӑҫлӑн тултарса пынӑ. Кӑҫал унӑн 250 пин кирпӗч тата 80 пин черепицӑ туса кӑлармала. Паллах, ку плана пурнӑҫа кӗртни колхоза пысӑк тупӑш парат̆.

Анчах колхоз руководителӗсем вӑл ӗҫе хакламаннине пула плана тултарасси питех те кайа йулнӑ. Пайана 50 пин кирпӗч кӑна тунӑ, черепицӑ икӗ пин те туман. Черепицӑ савӑчӗ лартма панӑ укҫа-тенкӗне урӑх ҫӗре расхутлаҫҫӗ.

В. Андрийанӑв,

Алексейӗв.

Тӗне хирӗҫле ӗҫе вӑйлатсах пымала

Вӑрҫӑлӑ Турӑсӑрсен Сойузӗн (ВТС) Чӑваш республикӗнчи Совечӗ тӗнпе кӗрешес ӗҫре сахал мар ҫитӗнӳсем турӗ. ВТС членӗсен шучӗ 18 пин ҫынна ҫитрӗ. Ененме пӑрахасси 60—70 ҫулсене ҫитнӗ ватӑ ҫынсем хушшинче те сарӑлсах пырат̆. Тӗслӗхе Урапакасси йалӗнчи (Йетӗрне р.) 71 ҫулхи Йакӑв Никитина, Черепанӑвӑри (Хӗрлӗ Чутай р.) 70 ҫулхи Макҫим Уйакова илсе кӑтартма пулат̆. Ененменнисен шучӗ ӳсесси, массӑлӑ ӑнлантарулӑ ӗҫе аңлӑн сарнинчен нумай килет. Чӑвашсовет массӑлӑ ӑнлантарулӑ ӗҫе „раштав", „мӑнкун", „троицӑ" праҫникӗсене хирӗҫле кампанисенче анлӑн туса пычӗ. Тутаркас, Йетӗрне, Хӗрлӗ Чутай т. ыт. районсенче ВТС Чӑвашсовечӗн агитповозкисем ӗҫлерӗҫ. Шупашкарта тӗне хирӗҫле выставкӑ ӗҫлерӗ, халь вӑл Куславкка, Канаш, Улатӑр, Ҫӗмӗрле т. ыт. районсене тухса кайнӑ. Тӗнпе кӗрешес ӗҫе вӑйлатасси вырӑнти ВТС организацисем лайӑх ӗҫленинчен нумай килет. Пирӗн республикӑра хӑшпӗр ВТС райсовечӗсемпе йачейкӑсем чылайах аван ӗҫлеҫҫӗ. Кун пеккисенчен Йӗпреҫ райсоветне тата Баймашкино (Хӗрлӗ Чутай р.) колхоз йачейкине илсе кӑтартма пулат̆.

Йӗпреҫ районӗнче йулашки виҫӗ уйӑх хушшинче тӗне хирӗҫле докладсемпе калаҫусем 200 ытла туса иртернӗ. Баймашкино йачейкинче кашни уйӑхрах пӗрер калаҫу пулса иртет.

Йӗпреҫ районӗнче Верховнӑй Совета суйлама хатӗрленнӗ вӑхӑтра массӑ хушшинче 123 калаҫу, 49 доклад тата 25 лекци туса иртернӗ. Темӑсем: „Сталинла Конституци тата тӗн", „Хӗрарӑмпа тӗн", „Икӗ тӗнче—икӗ суйлав ҫиҫтеми тата тӗн". Баймашкинора та ҫакнашкал темӑсемпех лекцисем туса иртернӗ.

Хаљ, хӗрӳлӗ ӗҫ пынӑ вӑхӑтра, пупсем тӗрлӗрен тӗн сӗрӗмлӗ праҫниксем туса иртереҫҫӗ. Тӗн праҫникӗсем август уйӑхӗнче саккӑр, сентйабӗрте улттӑ пулаҫҫӗ. Ку пысӑк сийен кӳрекен уттавлӑ тӗн праҫникӗсемпе вӑйлӑн кӗрешмеле. Йӗпреҫ райсовечӗ „1-мӗш спас", „иккӗмӗш спас" т. ыт. тӗн праҫникӗсен сийӗнӗ ҫинчен массӑна ӑнлантарса парат̆. Ҫав вӑхӑтрах Шупашкар районӗнчи совет ку тӗлӗшпе нимӗн те тумаст̆.

Тӗне хирӗҫле ӗҫсен тӗп задачисенчен пӗри—пупсен, чиркӳ ҫыннисен, сектантсен совета хирӗҫле ӗҫӗсене тӑрӑ шыв ҫине кӑларасси. Йӗпреҫ райсовечӗ РСФСР тата ЧАССР Верховнӑй Совечӗсен суйлавне хатӗрленнӗ вӑхӑтра совета хирӗҫле ӗҫлесе пыракан тӗн ҫыннисене чылайӗшне тӑрӑ шыв ҫине кӑларчӗ.

Ӑнлантару ӗҫӗнче литературӑ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрат̆. Йӗпреҫ райсовечӗн тӗне хирӗҫле библиотекӑ пур, вӑл тӗне хирӗҫле хаҫат-журналсем тата ҫӗнӗ учебниксем ҫырӑнса илнӗ, массӑ хушшинче тӗне хирӗҫле хаҫат-журналсем сарнӑ. Баймашкино йачейки час-часах район центрӗнчен ҫӗнӗ литературӑсем илсе тӑрат̆. Шупашкар райсовечӗ кӑҫал хаҫат-журнал мӗн пурӗ те 79 екземплљар ҫеҫ сарнӑ. ВТС Чӑвашсовечӗ почтӑпа йанӑ литературӑна тӳлесе илмесӗр кайала тавӑрнӑ. Райсовет тӗне хирӗҫле ҫӗнӗ литературӑпа усӑ курас вырӑнне, кирлӗ кӗнекесене йышӑнмасӑр тӑрат̆.

Баймашкино йачейкинче 60 член, вӗсем член укҫине вӑхӑтра тӳлесе пыраҫҫӗ. Йӗпреҫре ВТС ретне ваттисем те нумай кӗнӗ. Ҫапла Сталин йачӗпе тӑракан колхозра 68 ҫулхи Ҫергей Никитин тата 70 ҫула ҫитнӗ Прохор Канарейкин колхозниксем кӗнӗ.

Шупашкар районӗнче мӗн пурӗ те 47 йачейкӑ ҫеҫ, вӗсенче 745 член. Член укҫине 145 тенкӗ ҫеҫ пухнӑ.

Йулашки вӑхӑтра хӑшпӗр вырӑнсенче тӗне хирӗҫле ӗҫ лапланма пуҫланине палӑртас пулат̆. Шупашкар хулинчи ВТС Совечӗ нимӗн те ӗҫлемест. Хула совечӗ августра пулакан тӗн праҫникӗсем мӗнле сийен кӳни ҫинчен халӑха ӑнлантарма мансах кайнӑ. Йелчӗк районӗнче те ҫавӑн пекех. Тутаркас, Ишлей райсовечӗсем Шупашкар райсовечӗ пекех, Чӑвашсовет йанӑ ҫӗнӗ литературӑна йышӑнмасӑр кайала тавӑрса панӑ. Маркӑсене йышӑнманнисем те пур. Куславкка райсовечӗ хӑй ыйтса илнӗ маркӑсене почтӑра ҫур ҫул вырттарнӑ та, ВТС Чӑвашсоветне кайала йанӑ.

Ҫулталӑк ытла ӗнтӗ—райсоветсем член кӗнекипе маркӑсемшӗн 3071 тенкӗ парса татман.

Ку ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе ВТС Чӑвашсовечӗ хӑй те нимех те туман.

Шупашкар райсовечӗн председателӗ Иванов, Йелчӗк райсовечӗн председателӗ Кириллӑв йулташсем: „пире халь ҫеҫ суйлӗнӑ", „вӑхӑт ҫук" т. ытти сӑлтавсемпе ответлӑха хӑйсем ҫинчен сирсе ӑрасшӑн. Тӗне хирӗҫле ӗҫе хакламаҫҫӗ.

Йӗпреҫ районӗнче апла мар. Председатӗл Тугарӗв йулташ активлӑ ӗҫлет, райсовет коллективӗпе тата йачейкӑсемпе тачӑ ҫыхӑнса тӑрат̆. Районри ВТС Совечӗ ҫумӗнчи лектӑрсен группинче 41 ҫын ӗҫлет.

Вӑрҫӑлӑ турӑсӑрсен сойузӗн тӗне хирӗҫле ӗҫе партипе комсомол, профсойуз т. ыт. организацисемпе тачӑ ҫыхӑнса туса пымала. ВТС организацийӗсен пӗрпӗрипе ӑмӑртса ӗҫлемеле.

Ф. Тимофейӗв.

Ҫӗнӗ пекарња

ҪӖРПӲ. Канаш—Шупашкар хушшинчи чукунҫул ҫинче, Ҫӗрпӳ станцинче ку тарнччен нимӗнле пекарња та пулман.

Станцӑра ӗҫлекен рабочисем валљи 9 километра Ҫӗрпӳ хулине кайса ҫӑкӑр илсе пынӑ. Ҫакӑн пек ҫитменлӗхе пула рабочисем ӗҫрен пӑрӑхса кайнисем те пулкаланӑ. Ҫакна шута илсе Патӑрйелӗнчи йалпо Ҫӗрпӳ станцинче 16 пин тенкӗ таракан ҫӗнӗ пекарња туса лартрӗ.

Августӑн 16-мӗшӗнче пекарња ӗҫе тытӑнчӗ. Вӑл талӑкра вӑтам шутпа 70 тоннӑ ҫӑкӑр пӗҫерсе кӑларат̆.

А. Иванов.

Рессор цехӗ ӑмӑртӑва хутшӑнчӗ

Канашри вакунсем йусакан савӑтри рессор цехӗнчи рабочисем стаханӑвла йухӑм пуҫланса кайни 3 ҫул тултарнӑ йатпа социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнчӗҫ.

Рессор цехӗ нормӑна йаланах 100 процент тултарса ӗҫлет. Рессоршчик Грунӑв йулташ хӑйӗн нормине 200 процент тултарат̆.

П. Ҫергейӗв.

Кабардино-Балкар АССР-че нацилӗ йурӑсемпе ташӑсен ансамбӑљне туса хунӑ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: ансамбӑљ ташласа кӑтартма хатӗрленет.

С. Хенкин фото ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

Сӑмахсене пӗр графикӑпа ҫырмала тӑвакан орфографи правилисемшӗн

А. Йефимӑв йулташ Куљтурӑн наукӑпа тӗпчев институчӗ хатӗрлесе панӑ Чӑваш орфографин тӗп правилисен пройекчӗ ҫинчен тӗрӗс калат̆: „... пройект чӑваш чӗлхинчи сӑмахсене икӗ ушкӑна уйӑрма, кашни ушкӑнри сӑмахсене хӑйне уйрӑм графикӑпа ҫырма вӗрентет" („Чӑв. Ком." 184 №). Ҫавӑнпа та ӗнтӗ, Институт хатӗрленӗ Чӑваш орфографи правилисем сӑмахсене пӗр тӗслӗ графикӑпа ҫырмала правилӑсем памаҫҫӗ, ҫакӑ вӑл—хальхи правилӑсен чи пысӑк ҫитменлӗхӗ.

Институт Чӑваш орфографи правилисене хатӗрленӗ чухне, урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсене ҫырассине кӑна асра тытнӑ И. Йакӑвлӗв ку тӗлӗшпе ҫапла ҫырнӑччӗ: „Ыйту пайанлӑха кивӗ орфографине улӑштарасси ҫинчен, интернационаллӑ сӑмахсене вырӑс графикипех ҫырмала тӑвасси ҫинчен, ҫав майпа вырӑс алфавитӗнчи ҫӗнӗ саспаллисем кӗртесси ҫинчен ҫеҫ пырат̆. Ҫапла ӑнланнӑ та Институт хӑйӗн задачине" („Чӑваш Коммунӗнчен"). Интернационаллӑ сӑмахсене пӑсмасӑр ҫырмала тӑвассине епӗр те ҫаплах ӑнланатпӑр, анчах тӗп чӑваш сӑмахӗсене ҫырассине ӗлӗкхи графикӑпах хӑварнине хирӗҫлетпӗр. Чӑваш орфографинче урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсене ҫырассинче ҫитменлӗхсем тем чухлех, вӗсене пӗтерсе пырас ӗҫе тытӑннӑ та Институт. Анчах, чӑваш чӗлхинчи сӑмахсене икӗ ушкӑна уйӑрса, уйрӑм правилӑсем парассинчен начар ӗҫ ҫук та пулӗ, тетпӗр епӗр.

Епӗр ӑнланнӑ тӑрӑх, графикӑ ӗҫӗнче ҫырулӑхӑн пӗр принципӗ пулмала, сӑмахсене уйрӑм ушкӑна уйӑрса тӑмала мар, уйрӑм ҫыру принципӗсем шутласа кӑлармасӑрах, пӗр графикӑпа ҫырмала. Епӗр сӑмахсене пӗр тӗслӗ графикӑпа ҫырмала тӑвакан орфографи правилисемшӗн. Ҫав принцип ҫинче тунӑ орфографи правилисем ҫеҫ вӑрӑм ӗмӗрлӗ, вӑрӑм вӑхӑта пыракан пулаҫҫӗ. Институтӑн орфографи правилисен пройекчӗ чӑваш орфографине, 1933-мӗш ҫулхи правилӑсем пек, икӗ принциплӑ хӑварат̆, малтанхи правилӑсен йӑнӑшнех тӑват̆. Институт сотрудникӗсен шучӗпе алфавита урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсене ҫырма кӗртнӗ ҫӗнӗ саспаллисем тӗп чӑваш сӑмахӗсене ҫырма йурамаҫҫӗ мӗн: ҫыру халӗхе икӗ принциплах йулмала пулат̆.

Институт йулашки вӑхӑтра ҫеҫ ҫак йӑнӑша тӳрлетес ҫул ҫине тӑчӗ. Н Резӳкова И. Йакӑвлӗв йулташсем ҫакӑн пирки умлӑ-хыҫлӑ статйасем ҫырчӗҫ.

Епӗ чӑваш орфографи умне халь тухса тӑнӑ ыйтусене илетӗп. Кашт ь, я, ю саспаллисене чӑваш сӑмахӗсене кӗртесси ҫинчен чарӑнса тӑмала пулат̆. Ку саспаллисене урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсенче ҫырнипе танах тӗп чӑваш сӑмахӗсенче те ҫырма пулат̆: интернационаллӑ сӑмахсенче хӑйсен графикине пӑсмасӑр ҫырма кирлӗ: каюта, июль, ноябрь, юпитер, купюра, Вася т. ыт. те; чӑваш сӑмахӗсенче йа, йу, љя, љу, њя, њу, т̆а, т̆у, ҫа, ҫу сочетанисене улӑштарма кирлӗ: ябала, юба, юлдаш, Лива, Михаля, юр, ял, увя, Алюна, Елюк, конюх, тяпкӑ, Тябук, Ентюк, сява, сюла т. ыт. те. Ку тӗслӗхсем ҫакна калаҫҫӗ: 1) ь, я, ю саспаллисене урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсенче анчах мар, тӗп чӑваш сӑмахӗсенче те ним иккӗленмесӗрех ҫырма пулат̆, ҫырӑва вӗсем йӑвӑрлатма мар, ҫӑмӑллатаҫҫӗ, 2) ҫапла ҫырни тата вӑл — сӑмахсене уйӑрса тӑмасӑр, пӗр графикӑпа ҫырмала туму кирлӗ.

Малала љ, њ, т̆, ҫ саспаллисем пирки. Ку саспаллисем ҫинчен ҫакна ҫеҫ калама тивет. Вӑл саспаллисен вырӑнӗ чӑваш ҫырӑвӗнче пысӑках мар, вӗсене ь, я, ю саспаллисем ҫӑмӑлах улӑштарма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа љ, њ, т̆, ҫ, саспаллисене пӗтерме пӗр-ик правилӑ ҫеҫ памала пулат̆. Мин шутпа правилӑсем ҫакӑн пекрех пулмала:

1) сӑмах пуҫламӗшӗнче те, варринче те, хыҫӗнче те ҫемҫе илтӗнекен л, н, т, с саспаллисем хыҫҫӑн: а) а саспалли пулсан—ля, тя сӑ ҫырмала: Лива, Михаля, тяпкӑ, сырӑк, сярӑк, еиран т. ыт. те, б) у пулсан — ню, ню, тю, сю, ҫырмала: хӑльхи, ахаль, ахальтен, вальли, супӑнь, Усьӑп, усь, кусьсем, кайасьсӗ т. ыт. те. Кунта вӑрӑмланнӑ льль, ньнь, тьть—тесе ҫыраҫҫисем те пысӑк йӑвӑрлӑхах пулса йулмаҫҫӗ. Вӗсене ҫырасси љљ, њњ, т̆т̆, ҫҫ — сене ҫырниччен ҫӑмӑлтарах пулмала.

Кунта кӑшт Н. Резӳкова хирӗҫ каламала пулат̆. Вӑл љ, њ, т̆ саспаллисене пӗтерсен те, ҫ—саспаллине пӗтерме май ҫук, тет. Тӗрӗс мар, љ, њ, т̆ саспаллисене пӗтерсен, ҫ саспалли пӗччен тытӑнса йулаймаст̆, ӑна пурӗпӗр ь, я, ю, саспаллисем пӗтереҫҫӗ. „Пирӗн ку сасӑ — уйрӑм сасӑ, вӑл вырӑс чӗлхинче ҫук" тенийех тытса хӑвараймӗ ҫав, Н. Резӳков йулташ.

Тепӗр ыйту, епӗ ун ҫинче чылайах чарӑнса тӑрасшӑн, вӑл— б, г, д, ж, з саспаллисене чӑваш сӑмахесене кӳртесси. Ку саспаллисем пирки Н. Резӳков йулташ илтӗсшӗн те мар, вӑл „б, г, д, ж, з саспаллисемпе нимӗнле майпа та усӑ курма май ҫук, мӗншӗн тесен чӑваш чӗлхинче вӑл сасӑсем ҫук", тет („Чӑваш Коммунӗ", 186 №).

Ҫук-ши чӑваш чӗлхинче йанӑракан хупӑ сасӑсем? Пур вӗсем. П, к, т, ш, с сасӑсем икӗ усӑ сасӑ хушшинче йе йалан йанӑракан хупӑ сасӑпа усӑ сасӑ хушшинче йанӑраса та, йанӑрамасӑр та илтӗнеҫҫӗ (вӑӑ — атта, сасӑ-сасса т. ыт). Йанӑраса илтӗннине б, г, д, ж, з саспаллисемпе кӑтартмала ӗнтӗ.

Хальхи ҫырура тӗмшӗн йанӑраса илтӗннӗ сасӑсене б, г, д, ж, з саспаллисемпе ҫырма май пур ҫинчех, условнӑ п, к, т, ш, с саспаллисемпе ҫыраҫҫӗ. Вырӑсем ҫырӑвӗнче апла мар, йанӑраса илтӗннине б, г, д, ж, з саспаллисемпе кӑтартаҫҫӗ: ядро, бетон, уголь, узел, абажур т. ыт. те. Пирӗн чӑваш чӗлхинче ҫав саспаллисене урӑх чӗлхерен кӗнӗ сӑмахсенче кӑна ҫырма пулат̆: абажур, ядро, орден, Дзержинский т. ыт. те, ытти сӑмахсене ҫырнӑ чухне п, к, т, ш, с ҫыртараҫҫӗ—лаша, кашӑк, йапала т. ыт. те. Анчах ыйтас килет: абажур сӑмахра тата лаша сӑмахра ж сасӑ мӗнрен уйрӑм йанӑрат̆? Ҫакӑ ҫех лайӑх курӑнат̆: б, г, д, ж, з саспаллисене чӑваш чӗлхине кӳртмеле, кӗскен, йанӑраса илтӗннӗ п, к, т, ш, с сасӑсене б, г, д, ж, з сӑспаллисемпе ҫырмала. Ҫакӑ вӑл, чи малтанах ҫырассине вуласенпе пӗр майлӑ тӑват̆; унтан тата вӗренекен ачасене пӗчӗкренех йанӑракан хупӑ сасӑсене хӑнӑхтарма та кирлӗ.

Пирӗн чӑваш шкулӗсенче халиччен вӗренекен ачасене б, г, д, ж, з сасӑсене чӑваш сӑмахӗсенче п, к, т, ш, с тесе вулама вӗрентеҫҫӗ. Ку ӗнтӗ пуҫламӗш шкулта вырӑс чӗлхине вӗреннӗ чух пысӑк чӑрман пулса тӑрат̆. Шкул ачи—апат, сасӑ, лаша, пӗкӗ, атӑ, шапа сӑмахсенчи йанӑракан б, г, д, ж, з сасӑсене п, к, т, ш, с вулама вӗреннӗскер, вырӑс сӑмахӗсене ҫирӗп, тӗрӗс вулаймаст̆ ҫеҫ мар, ҫырассинче те йанӑракан хупӑ сасӑсем пирки иккӗленет: итет, превно, том, груп тесе ҫырнине час-часах куратпӑр.

„Йанӑраса илтӗннӗ пек тунӑнат̆, анчах вӗсем йанӑрамаҫҫӗ" тени суйа. Ку „теори" кивелнӗ ӗнтӗ. Ҫапла, б, г, д, ж, з саспаллисене чӑваш сӑмахӗсене кӳртмелех пулат̆. Ҫав май пройектри 2 мӗш §-ӑн 1 мӗш асӑрхамалине те пӑрахӑҫа кӑлармала пулат̆.

Вырӑс алфавитӗнчен илнӗ б, г, д, ж, з, ь, я, ю, з саспаллисене интернационаллӑ сӑмахсенче ҫеҫ мар, тӗп чӑваш сӑмахӗсенче те ҫырмала.

Учитӗл Н. Никифӑрӑв.

Германи вăрçа хатĕрленни

Англири пичет пĕлтернĕ тăрăх, Берлинри предприйатисенче ĕçлекен работницăсем „Мобилизаци кунĕнче сирĕн çавăн пек участкăна пымала" тесе çырнă пĕлтерӳ илнĕ. Нумайĕш работницăсем вĕсене Берлинран тухса кайса ытти хуласенчи вăрçă предприйатисене куçма хушакан пĕлтерӳсем илнĕ. Англи пичечĕн сведенийĕсем тăрăх, Германири йăвăр промышленнăç валĕçи арçынсем выранне ĕçлеме 40 процент хĕрарăмсем пуçтарма шутлаççĕ.

Çавăн пекех Лондăнран та Германире вăрçă нушисем валĕçи кирлĕ тĕрлĕрен материалсене мобилизацилени тата конфискацилени çинчен пĕлтереççĕ. Çак кунсенче полици цемент савăчĕсене пырса мĕн пур хатĕр продукцине конфискациленĕ, вăл продукцине Германин хĕвеланăç чикине йараççĕ. Çĕршыври мĕн пур горӳчи хисепĕнчен 60 процентне халĕ çарсем валĕçи усраççĕ. Иăуĕ уйăхĕн пуçламăшĕнче йут çĕршывсенчен йатарласа çарсем валĕçи нефт тата каучук илме 5 400 пин фунт стерлинг панă пулнă

Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германин 43-мĕш пехотлă дивизийĕ укрепленисем тума Фрейбурга пынă. Укрепленисен иккĕмĕш линине Кайзерштурта тăваççĕ. Рейн тăрăхĕнче танксене хирĕç кĕрешме 15 метр тарăнĕш тарăн шăтăксем тăваççĕ. Рейн шывĕн сылтăм çыранĕ тăрăх тăватă рет пралук картасем тăваççĕ, вăл пралуксем тăрăх електричĕствă токĕ йараççĕ.

60 çул таранчченхи мĕн пур арçынсене строительствă тата укрепленисем тума мобилизациленĕ.

Çĕршывра пăшăрхану тата вăрçа хатĕрленнипе килĕшменлĕх ӳсет.

Англи хаçачĕ „Манчестер Гардиан" Германире вăрçа хирĕçле пропагандă сарнă чухне пулнă интереслă ĕç çинчен çырат. Çак кунсенче антифашисла организацисем конвертсем ăшне çыпăçтарнă 100 пин ытла листовкăсем сарнă. Конвертсем çине Германири государствă лотерейĕн адрĕсне çырнă пулнă, çавăнпа та пуштă тата телеграф министĕрстви çав „лотерей билечĕсене" йӳнĕрех хакпа йама ирĕк панă. Вăл листовкăсенче Германи халăхне Германири çарсен хальхи маневрисене хирĕç выступленисем тума чĕнне пулнă. Кунсăр пуçне тата листовкăсенче Германи çарĕ вăрçасшăн маррине тата фашисла партисем Германи халăхне вăрçа йавăçтарма мĕн пур вăйсене хунине кăтартса çырнă.

(ТАСС).

Китайри саккăрмĕш революцилĕ халăх çарне туни çулталăк çитнĕ

Августăн 25-мĕшĕнче Китайри Херлĕ Çартан Китайри 8-мĕш революцилĕ халăх çарне туни пĕр çулталăк çитнĕ. Саккăрмĕш çар командуйущийĕ генерал Чжу Де пĕлтернĕ тăрăх, пĕр çул хушшинче саккăрмĕш çар тăшманпа 600 хут вăрçнă. Саккăрмĕш çарпа çапăçнă чухне йапонецсем йенчен вилнисем тата суранланнисем 34 пин çын пулнă. Йапони салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе пин çынна тыткăна илнĕ. Йулашки вăхăтри çапăçусем çинчен Чжу Де çапла шантарса калана: Йапони çарĕсем Ханькоу çине тăвакан наступленине çĕмĕрсе китайĕцсем, хăйсен çухатнă территорисене кайала илсе, йапонецсене Китайск тинĕсне ывăтса пĕтерĕç,—тенĕ.

(ТАСС).

Китайри вăрçă ĕçĕсем

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Йапони самолĕчĕсем Китай хулисем çине варвăрла бомбардировкă туса, ашшĕ амăшĕсĕр тата килçуртсăр тăратса хăварнă пĕчĕк ачасем.

(Союзфото).

Франци компартин Тĕпком Политбӳровĕн ларăвĕ

ПАРИЖ, августăн 25-мĕш. Пайан Францири коммунисла партин Тĕпком Политбӳровĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Пичетре тухнă официаллă пĕлтерӳре компарти мĕн пур майсемпе халăх фрончĕн пĕрлĕхĕшĕн тăрăшни çинчен каланă.

Пĕлтерӳре çакна паллă тунă: „Капиталисла олигархи, трестсем, спекулянтсем Францири халăх фрончĕн социаллă çĕнтерĕвĕсене хирĕç нумай уйăхсем хушши кампани тăваççĕ, — ăна вĕсем Лондăнри Сити банкирĕсемпе тата Римпа Берлинри фашисла влаçсемпе пĕрлешсе тĕп тăвасшăн.

Пурте вĕсем 40 сехетлĕ ĕç ерни çине наступлени тума ыйтаççĕ, правителĕствă пуçлăхĕ те хăй йышăннă программăна тата июлĕн 14-мĕшĕнче панă присăгăна манса ун пек тума хатĕр".

Политбӳро — халăх фрончĕн социаллă саккунĕсене пăсма хăтланакансене хирĕç Франци халăхĕ пĕр кăмăллăн çĕкленессине паллă тăват. Çакăн çинчен халăх фрончĕн комитечĕсем тата ĕççыннисен тĕрлĕрен организацисем йышăннă нумай резолюцисем ĕнентерсе параççĕ.

„Программăна тата июлĕн 14-мĕшĕнчи присăгăна çирĕп тытса пырас паллăпа тунă халăх фрончĕн пĕрлĕхĕ çĕршыв пурнăçĕшĕн кирлине" кăтартат.

Политбӳро Францири мĕн пур ĕççыннисене тата мĕн пур демократсене „республикăн социаллă саккунĕсене пăсма парас марришĕн нихçанхинчен тачăрах пĕрлешме" чĕнет.

Политбӳро халăх фрончĕн нацилĕ комитетĕнчи тата сулахай ушкăнсен парламент делегацинчи хăйĕн делегачĕсене мĕн пур партисене тата халăх фрончĕн организацийĕсене çакăн çинчен чĕнме хушат: халех парламент пухса унта 40 сехетлĕ ĕç ерни тăвакан саккуна тата ытти мĕн пур социаллă саккунсене — вăл саккунсенчен нимĕн те илмесĕр — чаплăн йышăнма ыйтмала.

Политбӳро — мĕн пур коммуниссене социалиссемпе тата халăх фрончĕ майлă тăракан ытти мĕн пур çынсемпе пĕрлешсе ĕçлесе пĕрлĕхе çирĕплетсе пыма ыйтат, —реакцине тата фашиссен хăратăвĕсене хирĕç тăма рабочи класан çав икĕ партийĕ хушшинче пĕрлĕх пулни кирлĕ.

(ТАСС).

Финанс активĕ лайăх ĕçлет

ТРАК. Тĕрер йалсоветĕнче укçа-тенкĕ пухассипе иртнĕ çулсенче начар ĕçлесе пынă, пĕр кварталта та финанс планне тултарайман. Финанс çекцийĕ хут çинче çеç шутланса тăнă.

Кăçал йалсоветри финанс çекцине тăрăшса ĕçлекен çынсенчен организацилесе çирĕплетрĕмĕр. Çекцире 23 çын тăрат, унăн руководителĕ Журавльов йулташ. Çекци членĕсене ĕçлеме лайăхрах пултăр тесе, кашни член çумне 13—15 хуçалăх çирĕплетрĕмĕр. Финанс çекцин пĕтĕм ĕçĕ план тăрăх пулса пырат. Кашни член хăй мĕн тумалине лайăх пĕлсе тăрат.

Кăçалхи йалхуçалăх налогĕн саккунĕ çинчен колхозниксене, йединоличниксене ăнлантарса патăмăр. Халĕ ССРС Верховнăй Совечĕн 2-мĕш Çессинче ССРС Финанс Халăх Комиссарĕ Зверĕв йулташ 1938 çулти пĕтĕм государствăн бюджечĕ çинчен тунă доклада ăнлантарса паратпăр. Финанс çекци çумĕнче „Финударник" йатлă çтена хаçачĕ тухса тăрат. Хаçат укçа-тенкĕ пухассипе çекци членĕсем мĕнле ĕçленине çутатса тăрат.

Финанс çекцийĕ укçа-тенкĕ пухмалли плана вăхăтра тултарса пырас тĕлĕшпе Метикасси йалсоветĕнчи финанс çекципе ăмăртса ĕçлет. Кашни член пĕр-пĕринпе ăмăртăва тухнă. Вĕсем хăйсем илнĕ обйазателĕствăна йаланах тултарса пыраççĕ. Августăн 15 мĕшне илсен, йалсоветри мĕн пур хуçалăхсенчен 40 процент йалхуçалăх налогне тӳлесе татрĕç. Виççĕмĕш кварталта Тĕрер йалсоветĕнче 15 650 тенкĕ пухмала. Августăн 15-мĕшне 8 036 тенкĕ пухнă, плана 51,5 процент тултарнă. Виççĕмĕш квартăл финанс планне срукченех тултарассишĕн тăрăшса ĕçлетпĕр.

Налог агенчĕ
Бор. Терентйĕв.

Укçа-тенкĕ пухас ĕçе вăйлататпăр

ШАХАСАН. „Красноармейĕц" колхозри зайом уполномоченнăйĕ Павлăв, „Майăн 1-мĕш" колхозри зайом уполномоченнăйĕ Матвейĕв йулташсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре кăтартуллă ĕçлеççĕ. Вĕсем колхозниксемпе йаланах укçа-тенкĕне срукчен тӳлесе татас пирки калаçусем ирттереççĕ. Зайом уполномоченнăйĕсем тăрăшнипе „Красноармейĕц" колхоз членĕсем çак ерне хушшинче зайом укçине 480 тенкĕ, йалхуçалăх налогне 520 тенкĕ пухрĕç. Майăн 1-мĕш колхоз членĕсем зайом укçине 580 тенкĕ пухрĕç. Налогпа страховкă укçисене пухас ĕç те вăйлансах пырат.

Петров.

ПРИЗЫВ УМĔН

Хавасланса кĕтетпĕр

Тепĕр виçĕ кунтан пирĕншĕн, телейлĕ çĕршыври çамрăксемшĕн призыв комиççи алăкĕсем уçăлаççĕ. Епĕр çак куна пысăк хаваслăхпа кĕтетпĕр. Нурăс пульницинче (Вăрнар р.) выртса, хамăр куçăмăрсене трахомран сывататпăр. Пирĕн куçсене сыватас ĕçре З. Никифăрăвпа А. Сорокин тухтăрсем хытă тăрăшаççĕ.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретне таса ӳт-пӳлĕ тата çирĕп сывлăхлă пулса кайатпăр.

Призывниксем: В. Белов.
Г. Иванов.
Т. Трофимăв.

Призыв пулмали çурта илемлетеççĕ

ВĂРНАР. Районĕç тăвком 1917—18 çулсенче çуралнă çамрăксене Хĕрлĕ Çара илмели призыв кунне хатĕрленет. Халĕ призыв пулмали çурта плакатсемпе, лозунгсемпе, çулпуçсен сăнĕсемпе илемлетеççĕ. Призыва пынă çамрăксене вăхăта савăнăçлă ирттермеле пултăр тесе, призыв пулакан çурта шашкă-шахмăт, биллиард, патефон тата ытти тĕрлĕрен вăйă хатĕрĕсемпе музăк инструменчĕсем илсе пынă. Призыв вăхăтĕнче призыв пунктинче буфет пулат, кино, спектакльсем кăтартмала тăваççĕ. Докладсемпе лекцисем ирттерме те çынсем уйăрса хунă.

И. Зубровский.

Филармони концерчĕ

ШАХАСАН. Августăн 21-мĕшĕнче Чăвашсен государствă филармонийĕн артисĕсем Шăхасанта концерт лартса пачĕç. Концерта курма халăх нумай пухăннă. Артиссем хăйсен программине аван ирттерчĕç. Анчах программăна чăвашла йурăсемпе ташăсене кертмен.

В. Чв.

Телейлĕ ачасен амăшĕсем

Йамайкасси йалсоветĕнчи (Ишлей р.) Стаханăв йачĕпе тăракан колхоз членĕн Маркăвă колхозницăн 8 ача. Вăл нумай ачалă пирки государствăран 4 пин тенкĕ пулăшу илчĕ. Çав йалсоветрах Кагановичч йачĕпе тăракан колхозри Павлăвă колхозницă та 4 пин тенкĕ пулăшу илчĕ.

Вĕсем хăйсен ачисем валĕçи кĕпе-тумтирсем, атă-пушмаксем, вĕренмели хатĕрсем илсе пачĕç.

В. Никифăрăв.

Поçолкăри суту-илӳ

ВАРМАР. Поçолкăра суту-илӳ тăвас ĕç аванлансах пырат. Магазинсем культурлансах пыраççĕ. Нумай пулмаст Районта магазина йусарĕç. Халĕ продовольстви магазинне йусаççĕ. Кĕнекесем сутакан магазина тĕттĕм, начар çуртран урăх, сутă, таса çурта куçарчĕç.

5—6 çул кайала анчах Вăрмар поçолкинче тĕксĕм пӳртсенче суту-илӳ тунă. Халĕ универмаг, продмаг, раймаг, кĕнекесем сутакан магазин, сăра, кăвас сутакан киоскăсем тата столовăй, буфет чайнăй пур.

В. С. Алендейĕв.

Саслă кино стройкăра

Шупашкарти çĕнĕ стройкăра йулашки вăхăтра киносем кăтартма, концертсем йама пуçларĕç. Строительствăна киличчен чылай рабочисем, хĕрачасем саслă кино курман. Стройкăра халь саслă кинофильмсене мĕн пурĕ 14 кăтартнă. Августăн 24-мĕшĕнче пĕр каçрах икĕ фильм—„Крылатый маляр", „Пугачов" кăтартрĕç.

В. Дмитрийĕв.

Çĕрпӳ районĕнчи халăх сучĕ çинчен

Халăх сучĕсен халахпа йаланах тачă çыхăну тытни кирлĕ. Халăх сучĕсен суйлавне хатĕрленнĕ май, вĕсем хăйсен ĕçĕсем çинчен колхозниксен, ĕççыннисен умĕнче отчотсем тума тытăнмала пулат.

Çĕрпӳ районĕнчи халăх сучĕ кăçал çичĕ уйăх çурă хушшинче мĕн пурĕ те 5 çĕрте кăна отчот тунă.

Çĕрпӳ районĕнчи халăх сучĕн ĕçĕнче çитменлĕхсем нумай. Суда панă ĕçсене вăхăтра пăхса тухмаççĕ. Уголовнăй ĕçсене 5—10 кун хушшинче пăхса тухмала, вĕсем уйăхшарăн тытса усраççĕ. 10 кун хушшинче пăхса тухнă ĕçсем 19 процент кăна.

Халăх судĕнче пăхса тухман ĕçсем нумай. Августăн 1-мĕш тĕлне пăхса тухман ĕçсем 150 шутланат. Ĕçсене вăхăтра пăхса тухманни нумай чухне следăвăтĕлсенчен, следстви ĕçне паха туманнинчен килет.

Следствине чылай чухне йапăх ирттереççĕ. Аслă Тукаль йалсовет председателĕ Йермолайĕв йалсовет укçине растратă тунă ĕçе халăх сучĕ 3 хутчен следăвăтĕл аллине кайала тавăрса панă.

Судисполнителĕсем растратă тата алимент укçисене вăхăтра шыраса илмеççĕ. Çĕрпӳре пурăнакан Г. йулташ валĕçи Чăвашторг уйрăмĕнче ĕçлекен Кондратйĕвран пĕр çулталăкшăн ĕнтĕ алимент укçи шыраса илмен.

Халăх сучĕ йалсоветсенчи общĕствăлă судсемпе таччăн çыхăнман, йалти судсен ĕçне тăтăшах тĕреслесе тăмаст. Районра 34 общĕствăлă суд. Районри халăх судйи йалти общĕствăлă судсен ĕçне 3 çĕрте çеç тĕресленĕ.

Хăшпĕр йалсоветсенчи общĕствăлă судсен председателĕсем суд ĕçне йуратса вĕренсе пыраççĕ. Вĕсем ĕççыннисен массине социалисăмлă воспитани парас, кивĕ йăлапа кĕрешес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăваççĕ. Тавăшкассинчи общĕствăлă суд (председателĕ Филиппăв йулташ) иртнĕ çулта 43 ĕç пăхса тухнă, кăçал та лайăх ĕçлет. Йаланах халăх судне пырса пулăшу ыйтат, ытти йалсоветсенчи общĕствăлă судсен ĕçĕсемпе паллашат. Суд ĕçĕсем çинчен çырнă журналсемпе кĕнекесем вуласа хăйĕн пĕлӳлĕхне ӳстерет.

Вĕрмер йалсоветĕнчи общĕствăлă суд (председателĕ Йемельйанăв йулташ) иртнĕ çулта 40 ĕç пăхса тухнă, кăçал 24 ĕç пăхнă.

ССР Союзĕн Йустици Халăх Комиссарĕн приказĕ тата Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн постановленийĕ тăрăх 1938 çулта Çĕрпӳ районĕнче апрел уйăхĕнчен пуçласа 2-мĕш суд участки ĕçлеме тытăнмала. Анчах суд валĕçи уйăрнă çурт йурăхлă мар.

1-ш участкăри халăх сучĕн çурчĕ те йапăх. Тул йенчен пăхсан çурчĕ аван, анчах шала кĕрсен халăх сучĕн çурчĕ йеврĕлĕ мар. Пӳлĕмсем çитмеççĕ. Суд çурчĕн 2 пӳлĕм. Пĕр пӳлĕмĕ суд тумали зал. Ку зал тĕттĕм, чӳречесем пĕр пуçĕнче çеç. Тепри суд канашлăвĕсене ирттермели пӳлĕм. Ку пӳлĕм пĕчĕккĕ, тăвăр.

Хула совечĕсемпе районĕçтăвком халăх судĕнче ĕçлекенсене хватер тупса пама тăрăшмаççĕ. 2 мĕш участкăна ĕçлеме килнĕ судйа Парфенăв йулташ июлĕн 13-мĕшĕнчеппе, халăх следăвăтĕлĕ Архипăв йулташ 5 уйăх хватерсĕр пурăнаççĕ.

В. Ваçилйĕв.

СУД

Спекулянтсене тавар тăратнăшăн

1937 çулта йанварĕн 24-мĕшĕнче Санчурскра (Горький облăçĕ) С. Г. Бусыгин, К. А. Баранăв тата С. В. Толмачов спекулянтсене тытса арĕсленĕ пулнă. Вĕсен çумĕнче Криушăри вăрман хуçалăхĕн лавкинчи прикашчик Куприйан Денисăвич Бунаков çырса панă нагладнойсене тупнă. Бунаков спекулянтсене пулă парса тăнă. Вăл 244 килограм çупах пулăна 897 тенкĕ те 68 пуслăх, 122,8 килограм вĕтĕ пулăна 180 тенкĕлĕх т. ыт. те сутнă. Пĕтĕмпе 4 пичке пулăна (796 килограма) 1978 тенкĕ те 40 пуслăх сутнă. Спекулянтсем Бунакова пĕр килограм пулăна хăйĕн хакĕнчен 50 пусран пуçласа 1 тенкĕ те 25 пус таран ӳстерсе тӳленĕ. Çапла майпа Бунаков 769 килограм пулă сутса 436 тенкĕ тупăш илнĕ, укçине хăй кĕсйине чикнĕ. Кун хыççăн ăна ĕçрен кăларса тĕплĕ ревизи тунă. Ревизи хыççăн Бунаковăн 2650 тенкĕ растратă пулни палăрнă.

Бусыгин, Баранăв тата Толмачовăн ĕçĕсене пăхса тухма Санчурск хулинчи халăх судне панă.

Шупашкар хулинчи халăх сучĕ çак ĕçе пăхса тухса, Бунакова Уголовнăй Кодексăн 116-мĕш статйин пĕрремĕш пайĕпе айăпласа, виçĕ çул хушши тĕрмере лартмала турĕ.

В. Петров.

Футбол

Республикăри малти выранăшăн

Футбол вăййи йĕнĕпе республикăри малти вырана тухассишĕн пĕрремĕш группăра тăракан командăсем малтанхи хут тĕл пулса выльарĕç. Шупашкарти „Спартак" общĕствин пĕрремĕш команди Сĕнтĕрвăрри хулинчи сборнăй командипе выльанă, вăйă 6:1 шутпа „Спартак" команди çĕнтерниппе пĕтнĕ. Шупашкарти „Темп" общĕствин пĕрремĕш команди Йĕтĕрне хулинчи сборнăй командăна 4:0 шутпа çĕнтернĕ. „Буревестник" командипе Çĕрпӳ хулинчи сборнăй командă хушшинче пулнă вăйă 1:0 шутпа пĕтнĕ. Анчах „Буревестник" команди вратара урăх общĕствăран илсе тăратнă пирки çĕрпӳсем протесленĕ. Вăйăра „Буревестник" командине çĕнтернĕ, тесе шутланă.

Зайом укçине тӳлесе татрĕç

Килекçи йалсоветĕнчи (Çĕрпӳ р.) „Ĕмĕт" колхоз членĕсем Виççĕмĕш Пилĕкçуллăх Зайома 725 тенкĕлĕх çырăнна. Зайом уполномоченнăйĕ Гаврилăв йулташ тăрăшнипе халĕ колхозниксем зайом укçине 100 проценчĕпех тӳлесе татрĕç.

А. И.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Пĕрремĕш колхоз театрĕ çĕнĕ çезонра

Сĕнтĕрвăррипчи 1-мĕш колхоз театрĕ иртнĕ çезонра пысăк ĕçсем туса ирттерне. Вăл пĕр Сĕнтĕрвăрри хулинче районĕнче çеç мар, тата Куславкка, Вăрмар, Тăвай, Çĕрпӳ, Шупашкар, Канаш, Вăрнар, Йĕпреç, Шăхасан районĕсенче те ĕçленĕ.

Чăнах та, ку театр çезон хушшинче хатĕрленĕ çĕнĕ çпектакльсем йышлă темеле мар. Çезон хушшинче театр Биль-Белоцерковскин „Пограничника" пйесине, Гр. Градăвăн „Луна кум" комедине тата Н. Виртă çырнă „Земля" трагедине хатĕрлесе лартнă. Кунсăр пуçне театрăн репертуарĕнче пысăк программăлă концерт пулнă. Уйрăмăнах, вăл программăра суйлав темине çырнă йурă-сăвăсем, хальхи массăлă совет йуррисем паллă выран йышăнса тăнă („Телейлĕ çĕршыв"—Исаковский, „Хĕвелĕмĕр Сталин"—Лисковăн, „Ворошилăв çинчен хывнă йурă", „Çĕршыв йурри" т. ыт. те).

Çезон хушшинче (нойабĕр—июль) театр районсене 8 хут кайса, çирĕмшер кун ĕçленĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, театр район центрĕсенче, колхозсенче, савăтсенче 200 постановкă таран панă, вăл постановкăсенче 60 000 çынна йахăн пулнă. Кунсăр пуçне, театр тата шкул ачисем, пионерсем валĕçи утренниксем чылай лартнă (Çĕрпӳри ача çуртĕнче, Тăрмăшра (Тăвай районĕ), Собачкинăра т. ыт. те).

Колхоз правленийĕсем, клуб пуçлăхĕсем т. ыт. панă отзывсем тăрăх, театрăн постановкисем пур çĕрте те ăнăçлă иртсе пынă, куракансем вĕсене аван йышăннă.

Çинес çĕнĕ çезонра театр çакăн пек пйесăсем лартма палăртнă: „Мой мать" (А. Навроцкăн), „Правда хорошо, а счастье лучше" (А. Н. Островский), хальхи вăхăтри темăпа çырнă чăвашла пйесă (конкурса пынă пйесăсенчен), „Собственность" (Персоновăн).

Чăн малтан „Мой мать" пйесăна лартаççĕ. Ку—совет патриотисăмĕ çинчен çырнă питех те паха произведени. Пйесăри тĕп геройсем—совет çамрăкĕсем, комсомолецсем, савăтри стахановĕцсем. Пйесăн содержанийĕ, кĕскен каласан, çапла: Инçет-Хĕвелтухăçĕнче, Йапони чиккинче, савăтран кайнă стахановĕц Сашă Добранăва фашисла шпионсем вĕлереççĕ. Унăн выранне савăтри пур çамрăксем те кайма хатĕр,—парткома темĕн чухлĕ заявлени пухăнат. Анчах паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ пограничник Добранăвăн ватă амăшĕ, аслă ывăлĕн выранне хăйĕн кĕçĕн ывăлне, Владимира йарат. Хальхи тапхăрта, уйрăмăнах Хасан кӳлли тавраш ĕнче пулса иртнĕ çапăçусем хыççăн, ку пек пйесă лартни, йаланах питех те кирлĕ, усăллă ĕç пулат. Театр ку пйесăна суйлаваса илнине ырламалла çеç.

„Мой мать" пйесăна режиссĕр—комсомолец И. Молăдăв лартат, премйерă (малтанхи çпектакль) октабĕрĕн 29-мĕшĕнче. Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă кун пулмала. Вара ку спектакль Сĕнтĕрвăррипчи театр комсомолăн 20 çулхи уйавĕ тĕлне хатĕрленĕ парне пулса тăрат.

Йулашкинчен çакна калас пулат. Иртнĕ çезонра, театрта ĕçлекенсем каланă тăрăх, Искусствă управленийĕ йенчен театра йертсе пыни вуçех те пулман. Театр лартнă çпектакльсене йышăнма пĕр „начальник" те килмен, анчах положени тăрăх çпектакльсене управлени представителĕ пăхса тухса йышăнмала. Унтан та ытларах: июль уйăхĕнче Сĕнтĕрвăрри театрĕ хăйĕн çпектакльĕсене кăтартма Шупашкара пырсан, вĕсене курма управлени начальникĕ те, унăн заместителĕ те пыман. Çпектакльсем лартма колхоз театрне Академилĕ театрăн çуртне виçĕ кунлăх панă мĕн, анчах çав кунсенчех çурта темле гастрольсене кӳртсе йанă. Вара колхоз театрĕн пĕр çпектакль лартнă хыççăн, Шупашкартан тухса кайма лекнĕ. Паллах, Управлени колхоз театрне творчĕствăлă пулăшу пани çинчен калаçмали те çук,—вăл пулман. Хальхи вăхăтра ун чухнехи „начальниксем" çук ĕнтĕ, çĕнĕ руководствăран йертсе пырас ĕçе тĕпренех аванлатасса кĕтет театр.

Леонид Агакăв.

Канашри МТМ
ÇЛЕСĂР-МОНТАЖНИКСЕНЕ
тата
ТОКАРСЕНЕ ĕçе илет
Хватерсĕррисене валĕçи хватер пур.
ДИРЕКЦИ.

ШКУЛ АЧИСЕМПЕ АШШĔ-АМĂШĔСЕМ!
УСĂ КУРНĂ УЧЕБНИКСЕНЕ
СУТĂР
Усă курнă учебниксене КОГИЗ ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмĕн пур кĕнеке магазинĕсем те сутăн илеççĕ тата сутаççĕ.
5—5

Шупашкарти
çăкăр пĕçерекен савăта
йалан ĕçлеме
аслă бухгалтĕр заместителĕ,
счетовод-картотетчик,
çăкăр пĕçерекенсем
тата
çăкăр пĕçерме вĕренекенсем
кирлĕ
Чебторгăн çăкăр пĕçерекен савăчĕ.

Шупашкар ĕççыннисене
ПĔЛСЕ ТĂМА
ГОСБАНКĂН
ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ
КАНТУРĔНЧЕ
кăçалхи августăн 21-мĕшĕнчен пуçласа 1-мĕш разрйадлă перекет кассе уйрăмне уçнă. Вкладсем тата государствă зайомĕсем тăрăх операцисем пулаççĕ.
Ирхине 10 сехетрен 2 сехетчен уçă.
Тĕп Перекет касси.
3—3

КОМНАТА в г. КУЙБЫШЕВЕ
12—14 кв. метров в центре города
меняется
НА КОМНАТУ в ЧЕБОКСАРАХ
С предложением обращаться: Чебоксары, Дом печати, 2 этаж, комната № 11, Смирнову И.

Шупашкарти ерех савăтне
ПЛАТНИКСЕМ, ШТУКАТУРСЕМ, КĂМАКА ТĂВАКАНСЕМ
кирлĕ
3—1

„Чăваш Коммунĕ" хаçата илме хакĕ: пĕр уйăха 2 т. 50 пус, 3 уйăха 7 т. 50 п., 6 уйăха 15 т., çулталăка 30 тенкĕ. Подпискăна сыхăну уйрăмĕсем, письмоносецсем йышăнаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 453 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 663.